*Уяв ячĕпе саламлатпăр!*

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

8(878) №, 2015, март/пуш, 7

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

● Хĕрарăм ĕмĕр тăршшĕпе ача выранĕ патĕнче 3000 ытла сехет иртерет, 500 тĕслĕ апат хатĕрлет, Эльбрус çӳллĕш япала çăвать, çĕр чăмăрне яваламалăх алшăлли якатать… 3 стр.

●Кĕмĕл çĕрĕ хуралчĕ 8 стр.

●Мускав "урокĕ". 9 стр.

●Мухмăр яшки. 10 стр.



## Хаклă хĕрарăмсем!

Сире Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ – Мартăн 8-мĕшĕ – ячĕпе чунчĕререн саламлатăп!

Пурнăçра чи çутти тата чи лайăххи – хĕрарăм сăнарĕнче. Мĕн авалтан этемлĕхĕн илĕртӳллĕ пайĕ сăпайлăхпа тимлĕхе, ĕçченлĕхпе тирпейлĕхе, ырăпа ачашлăха сăнарланă. Çак пахалăхсем вĕсене кил-çурта хăтлăх кӳме, çемье вучахĕн ăшшине упрама, ачасене воспитани пама, ĕçхĕлĕн мĕнпур сферинче çитĕнӳ тума пулăшаççĕ.

Республика Правительстви ача амăшĕпе ачалăха пулăшас, çемье хаклăхĕсене çирĕплетес енĕпе çине тăрса ĕçлет. Çамрăк амăшĕсене ача çуратнăшăн паракан сертификатсен, пособисен, амăшĕн капиталĕн, патшалăх тĕревĕн ытти тĕсĕн шучĕпе финанс енĕпе пулăшатпăр.

Амăшĕн тата ача сывлăхне сыхлакан тытăма çĕнĕ йышши медицина технологийĕсемпе çине тăрса пуянлататпăр. Ача сачĕсем пĕрин хыççăн тепри çĕкленеççĕ, çакă амăшĕсене декрет отпускĕ хыççăн професси енĕпе ĕçлемешкĕн хăвăртрах таврăнма май парать.

Патшалăх тимлĕхĕ хĕрарăмсене ыранхи кун тĕлĕшпе шанăç кӳрет, республикăра ача çуратасси модăна кĕчĕ, нумай ачаллă çемьесен шучĕ ӳсет.

Ачасене çĕршывăн тивĕçлĕ гражданĕсем пулса çитĕнмешкĕн воспитани парассипе çыхăннă яваплăхăн йывăр тиевне хăвăрăн ачаш хулпуççисем çинче тытса пынăшăн сире чунтан тав тăватăп.

Юратнă хĕрарăмсем! Çуркуннехи çак уяв кунĕнче сире ырăлăхшăн, чун пуянлăхĕшĕн, тĕнчене çутăрах, хăтлăрах тата илемлĕрех тума пултарнăшăн чĕререн тав сăмахĕсем калатăп!

Сире тата çывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, юрату, ăнлану, тӳсĕмлĕх, телей тата ырă сунатăп!

**Чăваш Республикин**
**Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ**

## «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат редакторне Маргарита ИЛЬИНАНА

Хаклă Маргарита Михайловна!

Сире **«Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ»** хисеплĕ ят илнĕ ятпа чунтан-чĕререн саламлатпăр.

Эсир нумайранпа ăнăçлă редакцилекен, чунăр ăшшипе ăшăтакан «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатăн шăпи-кунçулĕ телейлĕ пултăр, Хăвăр вара яланах сывă та хаваслă, пултаруллă та ăраскаллă пулăр!

**«Хыпар» Издательство**
**çурчĕн туслă йышĕ.**


2 стр.

Татьяна НАУМОВА сăнӳкерчĕкĕ.

# «Физкультура урокĕ» – чиперуксем валли

**Вăрмар районĕнчи Тикашра маттур та ӳркенмен хĕрарăмсем пурăнаççĕ. Эрнере виçĕ хутчен шкулти спортзала пуçтарăнаççĕ. Чăн-чăн физкультура урокĕ иртет кунта! Чупаççĕ, сикеççĕ, тĕрлĕ хускану тăваççĕ, кире пуканĕ çĕклеççĕ арăмсем. Баскетболла е волейболла та выляççĕ. Вĕсене курса-сăнаса хам та хавхалануллă кăмăлпа таврăнтăм. Тикаш хастар хĕрарăмĕсенчен чылай çамрăкрах пулин те шкулти физкультура урокĕсене манма ĕлкĕрнĕ-çке. Çавăнпах мечĕк тытса ывăтасси хаçат ĕçченĕшĕн те пĕчĕк ача савăнăçĕ евĕрех пулчĕ.**

Выранти ял тăрăхĕнче ĕçлекен Зоя Семенова спортзала тăтăшах çӳрет. Ара, ыттисемпе юнашар тăрса авăнассишĕн, вăйă выляссишĕн Зоя Ивановна апат вăхăчĕпе усă курать.

– Çынсем спортпа туслашни, сывă пурнăç йĕркине пăхăнма ăнтăлнине мухтамалла çеç, – тет ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Черкасов. – Хĕрарăмсем чăнах та маттур! Çамрăксене те ырă тĕслĕх кăтартаççĕ вĕсем.

Ĕçтешĕ спортзалне хаваспах çӳренине, унтан хăпартланса таврăннине кура Галина Прокопьева та ырă йăлапа çывăхланма шухăш тытнă. Зоя Ивановна шăм-шакки çемçелнине каласа кăтартни витĕм кӳнех.

– Тĕрлĕ вăйă вылянине, чупнинесикнине ытла та хавассăн пĕлтерет те пĕр выранта епле чăтса ларăн? Паллах, эпĕ те хутшăнас терĕм. Сывлăха çирĕплетме те, шăм-шака çемçетме те пулăшать ку, – тет сăпайлăн Галина Степановна.

Ял тăрăхĕн администрацийĕнче ĕçлекенскер спортпа малтан та туслă пулнăха вăл. Пенсионерсен Вăрмарта иртнĕ спартакиадинче ишессипе пĕрремĕш вырăна тухнă. Хăвăртлăхĕпе палăрнăскер республика шайĕнчи ăмăртăва та хутшăннă.

– Хĕрлĕ Çырта çуралса ӳснĕ эпĕ. Кĕтне хĕрринче вырнаçнă вăл. Çавăнпах ачаранах шывран тухма пĕлмен эпир. Колхоза ĕçе кайсан та кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче киле çитиччен тӳрех шыва сикеттĕмĕр. Ишме хамран аслăрах кӳршĕ хĕрĕсем вĕрентнĕччĕ. Çиччĕсаккăрта кăна пулнă эпĕ ун чухне.

МАТТУРСЕМ!

# «Физкультура урокĕ» – чиперуксем валли

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

– Пилĕк ача ÿснĕ эпир, аттепе анне ĕçе кайсан хамăра ирĕклĕ туйнă. Ыттисен ваттисем пырса шывран тухма чĕнетчĕç. Эпир вара чун каниччен чăмпăлтататтăмăр, – аса илет Галина Степановна ачалăхне.

Сывлăха çирĕплетес тĕллевлĕ хĕрарăм сахал мар Тикашра. Марина Кандакова, Василиса Волкова тата Галина Софронова Хĕрлĕ Çыра куллен çитсе килеççĕ. Василиса Ивановнăпа Галина Ивановна пĕр тăвансем. Малтан иккĕшĕ те хулара пурăннăçĕленĕ. Тивĕçлĕ канăва тухсан аппăшĕпе йăмăкĕ мăшăрĕсемпе яла пурăнма куçнă.

– Кун пек секци йĕркелес шухăш тахçанах амаланнă. Хускални, выляни кăмăла çĕклет çеç мар, сывлăхшăн та усăллă, – тет пархатарлă пуçаруçă Людмила Филиппова. – Малтан шкул директорĕпе Николай Ивановпа канашларăм. Спортзала çÿрес кăмăл пуррине систертĕм. Вăл хирĕçлемерĕ. Шкулти физкультура вĕрентекенĕ Олег Мефодьев та ырласа йышăнчĕ. Шкул ачисем те уроксем вĕçленсен килĕсене васкамаççĕ. Тепĕр чухне пирĕнпе пĕрле тăрса выляççĕ.

1957 çулта Тикашра çуралнă пике çамрăклăхне Воркутара ирттернĕ темелле. Шкул хыççăн Шупашкарта балетмейстера вĕреннĕ. 1977-79 çулсенче клубра ĕçленĕ хыççăн çамрăк мăшăр аякри тăрăха тухса кайнă. Кунта çĕвĕçре ĕçлесе пурăннă Людмила Алексеевна. 1997 çулта тăван тăрăхне таврăннă – ку утăма тума мăшăрĕ вилни хистенĕ. Паян икĕ ывăлĕ те çемьеллĕ ĕнтĕ, асламăшĕ икĕ мăнукĕпе савăнать.

– Килте пĕчченех пурăнатăп. Кача-ка, чăх-чĕп усратăп. Çулла тĕрлĕ пахчаçимĕç, чечек-курăк ÿстеретĕп. Чунра вăй-хал тапни спортзала йыхăрать, – сăмахлать ăш пиллĕскер. – Концертсене те тăтăшах хутшăнатăп. «Ĕçчен хуняма» ята та тивĕçрĕм. Пĕрре те ахаль ларас килмест, – тет хастарскер.

Тикаш хастарĕсен йышĕнче 73 çулти Валентина Алексеева та пур. Шел, хăйĕнпе курнăçасси пулмарĕ.

– Кăсăкланакан, ыйтса пĕлекен чылай. Хамăр та пурне те чĕнетпĕр. Вăхăт иртнĕ май йыш хушăнасса шанатпăр.

– Шкулта ĕçлекенсем те юлмаççĕ, – тет ялти вулавăш ертÿçи Ираида Иванова. – Эпĕ те вĕсен ушкăнĕнчех.

Райпо лавккинче тăрăшакан Юлия Нарсова та шкула чупса каçма вăхăт тупатех. Эпир пынă чухне те спортзалраччĕ вăл. Часах тавар тиенĕ машина килнине каларĕç те маттур та пултарулла хĕрарăм ĕç вырăнне васкарĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

УЯВ

# Актриса, патша майри, шăпа...



**Хĕрарăма шăпах çак ăнлавсемпе танлаштарса пуçларĕ чăваш хĕрарăмĕсене халалланă уява Илона Броневицкая. Чăвашла, вырăсла, акăлчанла, испанла, французла, грузинла, эрменле саламларĕç висĕмкун республикăри хĕрарăм юхăмĕн хастарĕсене – шăпах çак чĕлхесемпе янăрарĕç юрăсем Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче. Чăвашла вара пухăннисене республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ырă сунчĕ.**

– Çемье, ырă йăла-йĕрке управçи – хĕрарăм, – палăртрĕ Михаил Васильевич хăйĕн сăмахĕнче. – Вăл тытăнсан кирек мĕнле ĕç те ăнăçать.

Пирĕн республикăра амăшлăха, ачалăха упрас тĕлĕшпе курăмлă ĕç пурнăçлаççĕ. Ача сачĕсен ыйтăвĕ татăлса пырать. Юлашки вăхăтра финанс лару-тăрăвĕ кăткăсланнине пăхмасăрах социаллă пособисен виçисене чакармасăр тата вăхăтра тÿлеççĕ. Тăрăшнин усси пур. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ республикăра пепке çураласси, нумай ачаллă çемьесен йышĕ ÿссе пырать.

– Ача кашни утти амăшне савăнăç кÿтĕр. Эпир, арçынсем, сире яланах хÿтĕлеме, упрама тăрăшăпăр, – вĕçлерĕ сăмахне республика Пуçлăхĕ хĕрарăмсене вăрăм ĕмĕр, пылак юрату суннă май.

Уяв кăмăлне Раççей эстрада юрăçи, теле-, радиокăларăмсен ертÿçи Илона Броневицкая хăпартлантарчĕ. "Юрату сассисем" проект авторĕ Майкл Найт американ тата унта хутшăнакан Этери Бериашвили грузинка тĕрлĕ жанра парăнтарма пултарчĕç: джаз, халăх юррисем, рок-баллада, эрмен авалхи кĕвви-юрри... Сăмах май, Этери – дипломлă пульмонолог. Турă пани тапса тухатех – çакна çирĕплетет вăл хăйĕн пултарулăхĕпе. Раççей тава тивĕçлĕ артисткине Варварăна уйрăмах ăшшăн йышăнчĕ чăваш хĕрарăмĕ.

**Рита АРТИ.**

Автор сăнÿкерчĕкĕ.

ЙĂЛА-ЙĔРКЕ

# Улаха пуçтарăнсан...

**Канашри таврапĕлÿ музейĕ Шăхасан ял тăрăхĕнче 2010 çулта йĕркеленнĕ хĕрарăмсен «Хозяюшка» клубĕпе тачă çыхăну тытать. Унăн йышĕнче – тĕрлĕ профессиллĕ 15-20 çын. Вĕсене вырăнти культура çурчĕн методисчĕ И.Петрова ертсе пырать.**

Клуб членĕсем тăтăшах улаха пуçтарăнса çыхаççĕ, тĕрлеççĕ, юрлаççĕ, çĕршыври, республикăри тата районти çĕнĕ хыпарсене сÿтсе яваççĕ, хăйсен пурнăçĕнчи çĕнĕлĕхсем çинчен каласа кăтартаççĕ.

Музейра «Хĕрарăм алли тунă хайлавсем» курав йĕркеленĕ. Кунта – тĕрленĕ картинăсем, çыхнă кĕпе-тумтир, чăлха-алсиш, çемçе теттесем тата ытти те.

Курава ал ĕçĕсем тăратнисенчен пĕри – Энтриялĕнче çуралса ÿснĕ, халĕ Шăхасанта пурăнакан Раиса Васильева. Вăл Канашри медицина училищинче сестрана вĕреннĕ, район больницин инфекци уйрăмĕнче ĕçлет. Пушă вăхăтра пултарулăх ĕçĕн ытамне кĕрсе ÿкет. Тĕрлеме-çыхма амăшĕнчен вĕреннĕ.

– Тĕрлесси – маншăн киленÿ, кашни хайлав – иксĕлми хĕпĕртÿ. Вĕсенче эпĕ çутçанталăка, чĕрчунсене, кайăксене, курăк-йывăçа, çĕр çинчи мĕнпур хитре япалана чĕререн юратни сăнланнă, – тет Раиса Петровна хăйĕн ĕçĕсем çинчен сăмах пуçарсан.

Г.Фадеева çыхма юратать, хĕрарăмсем валли чăваш тумĕ çĕлет, тухьяпа хушпу ăсталать. В.Ильина çемçе теттесем тума маçтăр, В.Иванова ал ĕçĕсенче чĕрчунсене, çынсене, çутçанталăка сăнлать, Н.Никитина – чĕнтĕр ăсти.

«Эпир Анне ятлă хĕрарăма ĕмĕр мухтатпăр» ятлă пысăк стенда Сиккассинче 92 çул пурăнакан З.Яковлевăна халалланă. Куравра унăн япалисемпе, документчĕсемпе, çемье архивĕнчи сăнÿкерчĕкĕсемпе паллашма пулать. Вăрăм пурнăçĕнче чылай йывăрлăха чăтса ирттерме тивнĕ унăн. Ашшĕ-амăшĕ çирĕп хуçалăх тытнă. Зоя ултă çул тултарсан ашшĕне кулак тесе пурлăхне туртса илнĕ, кĕвĕç чунлисем кил-çуртне вут тĕртнĕ. Ашшĕне Александр Суранова 1938 çулта халăх тăшманĕ тесе персе вĕлернĕ.

1949 çулта З.Суранова Сиккасси çамрăкне Николай Яковлева качча тухнă. Мăшăр тăватă ывăлпа икĕ хĕр ÿстернĕ. Пурте аслă пĕлÿ илнĕ, çемье çавăрнă, ача-пăчаллă. Суйкка кинемейĕн мăшăрĕ Николай Романович чукун çул çинче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. Пурнăçран 1994 çулта уйрălса кайнă.

Зоя Александровна колхозра 71 çула çитиччен вăй хунă. Тантăшĕсемпе пĕрле çĕрулми, выльăх кăшманĕ ÿстернĕ, тĕштырă пуха кĕртнĕ, утă çулнă. Канаш элеваторне вăкăрпа тырă турттарнă, вăрçă вăхăтĕнче Тăвай районĕнче окоп чавнă.

**Виталий АЧЧА.**

КОНКУРС

# Эх, мĕнле хĕрарăм!



**Йăлана кĕнĕ тăрăх çурхи уява – Мартăн 8-мĕшне – халалласа юнкун Шупашкарта «Эх, мĕнле хĕрарăм!» ятпа конкурс иртрĕ. Культура, вĕренÿ, производство тытăмĕнче тăрăшакан чиперуксем хăйсен тус-тантăшĕпе, çемйипе, ĕçтешĕсемпе пĕрле калама çук пуян уяв программи хатĕрленĕ. Юрларĕç, ташларĕç, ырăпа ачашлăха, илеме чун-чĕре витĕр сăнларĕç. Кашниех маттур, Турă пани те çук мар. Вĕсенчен пурте çемьери, хальхи обществăри, хула пурнăçĕнчи хĕрарăм ĕç-хĕлне усса пама тăрăшрĕç.**

Конкурс Шупашкарти хĕрарăмсен канашĕ пуçарнипе тата хула администрацийĕ пулăшнипе кăçал 9-мĕш хут иртрĕ. Уява уçнă май хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов хĕрарăмсене Шупашкарти мĕнпур арçын ятĕнчен саламларĕ. Карьерăри çитĕнÿсемшĕн, обществăпа политика ĕçĕ-хĕлĕшĕн, туслăхпа юратушăн, ĕç-хĕлĕн мĕнпур сферинче курăмлă çитĕнÿ, професси тĕлĕшĕнчен пысăк ăсталăх, яваплăх кăтартнăшăн пĕтĕм чунтан тав турĕ. Хулари хĕрарăмсен канашĕн председателĕ Ирина Клементьева та ăшшăн саламларĕ.

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин регион уйрăмĕн секретарĕ Николай Малов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Валерий Филимонов конкурсантсене ăнăçу сунчĕç.

«Эх, мĕнле хĕрарăм – 2015» титула Шупашкарти агрегат заводĕн культура керменĕнче проектсен художникĕнче тăрăшакан Светлана Григорьева тивĕçрĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**

ВИЗИТ

# Хура тинĕс хĕрринчи хулара

**Февралĕн 26-28-мĕшĕсенче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Крым Республикинче ĕçлĕ визитпа пулнă. Февралĕн 27-мĕшĕнче Севастополь хулин Правительство çуртĕнче Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика хăвачĕн презентацийĕ иртнĕ.**




Кĕпĕрнаттăрăн-Севастополь правительствин председателĕн заместителĕ Алексей Еремеев хула çыннисемшĕн Раççейĕн ытти субъекчĕн тĕревне туйни пысăк пĕлтерĕшлине палăртнă.

Михаил Игнатьев Севастополь çыннисене тăванла чăваш халăхĕн ячĕпе саламланă, вырăс çар мухтавĕн символ-хулине килни чăваш делегацийĕшĕн пысăк чыс пулнине палăртнă. Михаил Васильевич пухăннисене республика аталанăвĕн çулйĕрĕпе паллаштарнă, икĕ регионăн экономикăпа культура çыхăнăвĕсем çирĕпленсе-аталанса пырасса шаннине палăртнă. «Пирĕн тĕллев – çынсен пурнăç шайне çĕклесси, вĕсем ыранхи куна шанса пурăнччăр, çирĕп çемьесем чăмăртаччăр, килĕшÿпе юратура кĕтнĕ ачасем çуралччăр», – тенĕ вăл.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Крым Республикинче ĕçлĕ визит программипе килĕшÿллĕн чукун çулсен электрификаци тытăмĕсем валли продукци туса кăларакан «Симферопольти электротехника завочĕ» ОООра пулнă. Çавăн пекех Михаил Васильевич «Крымтеплица» предприятие çитсе курнă. Республика Пуçлăхĕ унти футбол клубĕн стадионĕпе паллашнă – çулталăкăн çак вăхăтĕнче ăна Раççейри профессионалсен клубĕсем арендăна илеççĕ.

Симферопольти предприятисенче пулнă хыççăн Чăваш Ен Пуçлăхĕ Крымри чăваш диаспорин представителĕсемпе курнăçнă. Хăйĕн сăмахĕнче Михаил Игнатьев КР пуçлăхне Сергей Аксенова чăваш делегацийĕн визитне йĕркеленĕшĕн тав тунă, Крым çыннисене – Чăваш Енре çуралса çитĕннĕ йăхташсене – тăван ене килсе курма чĕннĕ.

Республика Пуçлăхĕ Севастопольти Хура тинĕс флочĕн музейĕнче тата Севастополĕн паттăр хÿтĕлевçисен «Çыран çинчи 35-мĕш батарея» историпе мемориал комплексĕнче пулнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Севастополе хÿтĕлесе пуç хунисен вилтăпри çине чечек кăшăлĕ хунă. Унтах Чăваш Ен каччисемпе, служба тивĕçне Хура тинĕс флочĕн карапĕсем çинче пурнăçлаканскерсемпе, курнăçнă.

Севастопольте Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата Севастополь кĕпĕрнаттăрĕ-Правительство Председателĕ Сергей Меняйло февралĕн 27-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе Севастополь Правительстви хушшинче Суту-илÿпе экономика, ăслăлăхпа техника, социаллă пурнăçпа культура енĕпе çыхăну тытасси çинчен калакан килĕшĕве пурнăçламалли мероприятисен планне алă пусса çирĕплетнĕ.

Документа пурнăçласа регионсен хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕн субъекчĕсен хушшинчи çыхăнăва аталантармашкăн условисем йĕркелеме палăртаççĕ.

Михаил Игнатьев Севастополь Правительствин Председательне тĕл пулăва йĕркеленĕшĕн тав тунă, Чăваш Республикин влаç органĕсен тата бизнес представителĕсен делегацине ăнăçлă ĕçлеме кирлĕ условисем туса панине палăртнă.

**Елена АТАМАНОВА.**

ХАÇАТ КУНĔ

# Журналистсемпе тĕл пулчĕç

**Иртнĕ эрнекун Йĕпреç районĕнчи Хурамалта «Хыпар» Издательство çурчĕн кунĕ иртрĕ.**



– Эпĕ «Хыпарпа» унăн кăларăмĕсене юратса вулатăп. Ĕç кунне те чи малтан чăваш халăх хаçатĕнчен пуçлатăп, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Чугаров.

«Хыпар» ИÇ тĕп редакторĕн заместителĕ Геннадий Максимов «Хыпар» кунĕн тĕллевĕпе, журналистсемпе, артистсемпе паллаштарнă май пухăннисем патне Издательство çурчĕн – тĕп редакторĕн Валерий Туркайăн салам сăмахĕсене çитерчĕ. Чăваш халăх поэчĕ алă пуснă кĕнекене район администрацийĕн пуçлăхне Николай Чугарова парнелерĕ. Хурамал, Чăрăшкасси, Çĕнĕ Выçли ял библиотекарĕсене вулакансен тавракурăмне аталантармашкăн кĕнекесем, журналсем тивĕçрĕç.

«Хыпар» çемйи кăларса тăракан хаçат-журнал ĕçченĕсемпе куçа-куçăн калаçма май пулчĕ çав кун Хурамалсен.

Чăваш эстрадин артисчĕсем – Алина Михайлова, Алина Савельева, Андрей Кузнецов – тĕл пулăва илемлĕ те çепĕç юрăсемпе пуянлатрĕç.

**Калем ăстисем Елчĕк районне те çитрĕç.**

Ку тăрăхра çуралса ÿснĕ, Елчĕк кинĕ-кĕрÿшĕ ята илтнĕ журналистсем «Хыпар» Издательство çуртĕнче сахал мар. Вĕсенчен чылайăшĕ ентешĕсемпе тĕл пулма хаваспах çула тухрĕ. Акă, «Хыпарти» культурăпа чăваш диаспорин пайне ертсе пыракан Надежда Смирнова та çулсем иртнĕ май пĕчĕк тăван кĕтесне таврăнма кăмăллине, ăна час-часах аса илнине палăртрĕ. Ентешĕсене Ирина Клеметьева та хаçатпа туслă пулма чĕнсе каларĕ. Уявра халăх умне тухса калаçакан кашни журналист вĕсем тăрăшакан кăларăма алла илсе вулакан йышланасса кĕтнине, шаннине пытармарĕ.

Тĕлпулăва пухăннисен кăмăлĕсене хăпартса, çывхарса килекен уявпа саламласа Алина Савельева, Александр Арсентьев, Евгений Николаев хăйсен илемлĕ юррисемпе савăнтарчĕç.

**Елена ГЛУХОВА, Татьяна НАУМОВА.**

Василий Кузьмин сăнÿкерчĕкĕ.

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Чăваш хĕрарăмĕ хăйне шеллемест

**Елена АТАМАНОВА**

**Хуралтăсемпе çурт тăррисенчен пăт та пăт! тумлать çурхи тумла. Сенкер тÿпери март хĕвелĕ те малтанхинчен янкăр çутăрах пек туйăнать. Йывăç тураттисем çинчи ир-ирех вăраннă чĕвĕл-чĕвĕл кайăксен сасси кирек камăн кăмăлне те çĕклĕ. Ыран хĕрарăмсен – ăш пиллĕ аннесемпе ырă-ырă кукамай-асаннен, чипер аппасемпе йăмăксен – мимоза шăршиллĕ, сар хĕвел шевлиллĕ ăшă та çутă, ачаш та черчен уявĕ.**

**«Анне» – пĕрремĕш тата сăваплă сăмах. Анне – кашни çын пурнăçĕнчи пуçламăшĕн пуçламăшĕ. Мĕнешкел ачашлăх, çепĕçлĕх, юрату тапса тăрать унра. Аннерен хаклăрах çын пурши çак тĕнчере? Çутçанталăк хĕрарăма тĕлĕнмелле туйăм парнеленĕ – амăшлăх туйăмĕ.**

**Студент чухнехи пĕр ÿкерчĕк час-часах куç умне тухать. Пĕрле вĕренекен хĕрача пĕрремĕш курс хыççăнах çемье çавăрнăччĕ. Ялтан пĕр эрнелĕхе сессие килнĕскер тĕп пасартан таврăнать. Витрепе валашка, кĕреçе туяннă çамрăк хĕрарăм калама çук савăнăçлă. Пуçĕнче экзамен шухăшĕ те çук тейĕн, тÿрех ачисем, упăшки, выльăх-чĕрлĕхĕ çинчен сăмах пуçарчĕ. Ăнланмарăмăр эпир ăна, унпа пĕрле хĕпĕртеме те пĕлмерĕмĕр çăмăлттайсем.**

**– Эпĕ качча тухсан урам тăрăх витре йăтса çÿреместĕп, – тутине пăрчĕ кăшт малалла утсанах хам пекех айванкка тантăшăм та.**

**– Мĕн япăххи кунта, манăн анне вара вăйĕ çитсен, ирĕк пулсан киле темĕн те сĕтĕрсе килме хатĕр, – тÿрех хирĕçлерĕ пĕр пÿлĕмре пурăнакан. Килте йăлтах çителĕклĕ, тулăх та хăтлă пултăр тесе тăрăшать йĕркеллĕ кашни хĕрарăм. Çакна эпир хамăр амăшĕ пулса тăрсан кăна ăнланса илетпĕр.**

**– Хĕрарăма нихăçан та çитмест, – тенине пĕрре мар илтме тÿр килнĕ. Этемлĕхĕн черчен çурри чи малтан тĕпренчĕкĕсем пирки шухăшланине ăнланасшăнах мар çав темшĕн. Хăйсен ачисене кăна мар, юттисене те çунат айне илсе ÿстерме вăй-хăват çитереççĕ те вĕсем.**

**Пирĕн республикăра тăван тĕпренчĕкĕсене пурнăç çулĕ çине кăларнă хыççăн çын ачисене усрава илсе юратупа ăшăлăх парнелекен чăннипех те нумай. Акă Улатăр районĕнчи Володинсем – 10 ачана, Патăрьел районĕнчи Чăваш Ишекĕнчи Уткинсем 7-шне хăйсен çемйине илнĕ. Нумай пулмасть вĕсен ялне çитсе килнĕччĕ. Шкулта вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекен Каролина Анатольевна хÿтлĕхсĕррисене татах та илес шухăшлăччĕ. Уткинсем арçын ачасене пĕчĕкренех çĕр ĕçне юратма, вĕлле хурчĕсем пăхма, тус-тăванлăха хаклама вĕрентеççĕ.**

**Шел те, юлашки вăхăтра çемьери йывăр лава ытларах хĕрарăм туртса пырать. Арçынсем ан кÿренччĕр те, çапах вĕсем çемçелсех кайнине ниепле те пытараймăн. Пĕлĕшсен хушшинчех икĕ-виçĕ ĕçре тăрăшакан хĕрарăм нумай. Упăшкисем те пур вĕсен, иртен пуçласа каçчен диван хураллаканнисем. Унашкаллисенчен халь тин ыррине кĕтсе илеймĕн. Ниçта ĕçлемен мăшăрĕсем киле урă таврăнсан та тем пек савăнаççĕ мăнтарăн хĕрарăмĕсем. Пĕчченех кредит тÿлеççĕ, ачисене вĕрентеççĕ, кулленхи пурнăçри мĕнпур ыйтăва та хăйсемех татса пыраççĕ. Йĕркеллĕн канаймаççĕ те, тен, çавăнпах хăйсен ÿсĕмĕнчен чылай аслă курăнаççĕ. Тĕкĕр умĕнче капăрланма мар, çÿçне турама та вăхăт çук вĕсен. Шел те, чăваш арçынĕсем мăшăрне упрама та, хаклама та пĕлеймеççĕ. Пурнăç тилхепине хăйсем те çирĕппĕн тытса пыраймаççĕ. Ирĕксĕрех хĕрарăмăн пур яваплăха хăй çине илме тивет.**

**Черчен те ачаш хĕрарăмра мĕн чухлĕ вăй-хăват, чăтăмлăх пурри тĕлĕнтерет те чылай чухне. Ир-каç та таçта çитме, темĕн çавăрттарса хума та ĕлкĕрет вăл. Уйрăмах чăваш хĕрарăмĕ хăйне нихăçан та шеллемест. Статистикăна илес пулсан, вăтамран амăшĕсем чирлĕ ача вырăнĕ патĕнче çĕр çывăрмасăр 3000 ытла сехет ирттереççĕ. Повар квалификацине алла илмен амăшĕсем пурнăç тăршшĕпе 500 тĕслĕ апат-çимĕç хатĕрлеççĕ. Унсăр пуçне Эльбрус тăвĕ çÿллĕш япала çăваççĕ. Çуса якатнă мĕнпур алшăллине хурса тухсан çĕр чăмăрĕ валли пиçиххи пулĕччĕ.**

**Арçынна шанса лармасть паян хĕрарăм. Вăл – политик, тухтăр, строитель, судья... Тĕрлĕ сферăра арçынпа тан ĕçлеме пултарнине чăннипех те çирĕплетрĕ. Хĕрарăм тĕнче уçлăхне хăпарма та, инженерире тĕшмĕртме те, автомобиле «çăварлăхлама», мĕн ĕмĕтленнине йăлтах пурнăçа кĕртме пултарчĕ. Карьерăн çÿлти картлашки çине хăпарнă паянхи хĕрарăм пĕр вăхăтрах çемьере те, ĕçре те вăхăтне шайлашуллă йĕркелеме пултарать.**

**Хĕрарăма çунатлантарма нумай та кирлĕ мар. Хăйне ырă сунакана вăл каялла ытларах та ăшăпа тавăрĕ. Çурхи уявра – Мартăн 8-мĕшĕнче пирĕнтен кашниех ăшă сăмаха, парнене тивĕçтĕрччĕ.**



ЫЙТĂМ

**Кама мĕн тĕсли килĕшет çав... Хитри кирек кама та илĕртет. Куçа йăмăхтаракан ырă шăршăллă чечеке асăрхамасăр иртсе кайма çук. Кама-тăр чаплă кĕлчечек килĕшет, тепри вара уй-хирти утмăлтуратпа салтак тӳмишĕн çав тери хĕпĕртет. Вăрман чечекĕн хăйĕн илемĕ.**

**Çĕр çинче чечек юратман хĕрарăм пур-ши? Пĕрисем парнелессе те кĕтсе тăмаççĕ – хăйсемех туянаççĕ. Çав хушăрах: «Упăшка мана чечек ан парнелетĕр. Çемье бюджетне тăкаклас мар», – тесе калакан та пур.**

**Пĕр арçын хунямăшне чунтан юратса юбилейра 51 кĕлчечек парнеленĕ. «Çав виç кунра хăрса каякан чечексемшĕн ман кĕрӳ 5 пин тенкĕ тăкакланă, ун вырăнне укçа панă пулсан комод илсе лартаттăм», – кăмăлсăрланнă хĕрарăм. Апла-и, капла-и, укçа та пулать те пĕтет, чечекĕ те виçĕ кунра хăрса каять – кăмăлтан парнелени çавах лайăх. Черчен те ачаш, ырă шăршăллă чечексене юратмасăр май çуках.**

**Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери уявĕ умĕн республикăри паллă чăваш хĕрарăмĕсене калаçтарас терĕмĕр. Вĕсене хăçан, мĕнле чечек парнелеççĕ? Ытларах мĕнлисене килĕштереççĕ?**



# Хĕрлисем, саррисем, шуррисем,
## ман савни, сан савни пеккисем...



**Ева ЛИСИНА, писатель:**

– Эпир ача чухне уявсенче чечек парнеленине курман, çуралнă куна та нихăçан та паллă туман. Çавăнпа çыхăннă-ши, чун çакна халĕ те йышăнсах каймасть. Эпĕ нихăçан та хамăн çуралнă куна палăртман, вăл маншăн пури, çук-и – пурпĕрех. Юбилей çывхарса килнĕ чухне ăçта тухса тармалли пирки темиçе уйăх маларах шухăшлама тытăнтăм. Сцена çине кăларса лартаççĕ те – эх, мухтаççĕ, ырлаççĕ... Ăçта кĕрсе каймалла кун пек чухне? Хăрушă питĕ, ăна чăтма калама çук йывăр. Шеллетĕп те çав çынна. Чăтаймарăм, юбилей умĕн Тверь облаçне тухса тартăм. Çулла эпĕ яланах унта пурăнма тăрăшатăп.

Чечек парнелени питĕ лайăх, анчах та савăнăçне туймастăп. Нумай пулмасть пĕр уявра темĕн чухлĕ кĕлчечек парса тултарчĕç. Саррисем, шупка кĕреннисем... Ман вара çав кун таçта та çитмеллеччĕ, пасара мăйăр илме те кĕмеллеччĕ. Аптраса ӳкрĕм, чечексене ăçта хумаллине пĕлместĕп. Чунтанах парнелерĕç-ха ĕнтĕ, ятарласа ман валли туяннă. Кунĕне хула тăрăх йăтса çӳрейменнине кура пĕр хĕрачана вăйпах тыттарса хăвартăм çав чечексене. Тепрехинче тата тĕлĕнмелле чаплă кĕлчечек çыххи парнелерĕç. Анчах та имçам шăршиллĕччĕ тата патне çывхарсанах куççуль кăларатчĕ. Çӳп-çап витрине пăрахма тиврĕ.

Сирень, çĕмĕрт çеçки питĕ хитре, шăрши те ырă. Ман пахчара кăтра чечеклĕ жасмин ӳсет. Тĕлĕнмелле хитре. Пасар саланас умĕн пĕр старик мана: «Тархасшăн, туян-ха çак жасмина, ĕмĕр тăршшĕпех мана асăнса пурăнăн, ахалех паратăп, укçине ячĕшĕн, алă каясран темиçе пус хăварăр. Электричкăна васкамалла», – терĕ хайхи. Халĕ те тав тăватăп çав старике. Шап-шурă, шултра чечеклĕ жасмин çуркунне ялти мĕнпур çынна илĕртет. Вăрманти чечексене те килĕштеретĕп. Кашни хăйне май илемлĕ. Анчах та мана тахçантанпах пĕр чечек килĕшет. Çакă мĕнпе çыхăннине те пĕлместĕп. Вăл пĕтĕм туйăма вăратать, чуна пырса тивет. Ку – вăрăран ӳсекен ахаль георгина. Саррисем те, кĕреннисем те, шупка хĕрлисем те пур. Эпĕ ăна хам пĕрремĕш хут Балтика тăрăхĕнче курнăччĕ. Хам пахчара эпĕ ăна акса ӳстерме те хăратăп, сыхланатăп унран. Вăйа туртса илĕ те...



**Валентина СИТОВА, ЧР тава тивĕçлĕ артистки:**

– Мана чи малтан Николай Булаткин артист чечек парнеленĕччĕ. Ун чухне иксĕмĕр те студентсем, Мускавра вĕренетпĕр. Пĕр кунхине вăл ман пата гвоздикăсемпе килнĕччĕ. Тем пекех хĕпĕртенĕччĕ, каччă чечек парнеленĕ-çке.

Чечексенчен ытларах астрăсемпе сарă хризантемăсем килĕшеççĕ. Пахча тулли çĕр-çĕр тĕрлĕ чечек ман. Вĕсене калчаран лартса ӳстеретĕп. Халĕ шăпах чӳрече анинче ешерме тытăнчĕç. Килте те, ĕçри гримернăйĕнче те хитре чечек нумай. Пурăнаймастăп эпĕ вĕсемсĕр.

Мартăн 8-мĕшĕнче тăван яла тем пысăкăш чечек çыххипе каятăп – манăн анне, тĕнчери чи хаклă çыннăм, Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕнче çуралнă, анчах та уяв кунĕ мар, 9-мĕшĕнче çыртарнă.



**Светлана САВЕЛЬЕВА, Чăваш халăх артистки:**

– Мана Ф.П.Павлов ячĕллĕ Шупашкарти музыка училищинче 2-мĕш курсра вĕреннĕ чухне пĕрремĕш хут тюльпансем парнеленĕччĕ. Ай-яй мĕнешкел савăннă уншăн. Çав каччă хĕрĕн кăмăлне тупма пĕлни куçкĕрет. Тĕпрен илсен, пур чечеке те кăмăлатăп.

Эпĕ çуркуннен пĕрремĕш кунĕнче çут тĕнчене килнĕ. Кăçал та кĕлчечек, хризантема парнелесе тултарчĕç. Çак илем киленĕç кӳрет, куçа туртать. Март тăршшĕпех сĕтел çинчи вазăран чечек татăлмасть – Хĕрарăмсен уявĕнче те, Театр кунĕнче те хисеп тăваççĕ.

Хулари нумай хутлă çурт çуменчи лаптăка та бархатцы, пион, флоксы... лартасси йăлара. Вĕсене мăнукăмпа иксĕмĕр пăхса тăратпăр: шăваратпăр, çумлатпăр. Иртен-çӳрен чечек татнине курсан чӳречерен шаккама пуçлатăп. «Илеме ан пĕтерĕр. Вăрлăх юлтăр», – тетĕп вара. Вĕрентсе каланине ăша хывасшăн мар. Тав тăвас вырăнне усал сăмахпа кӳрентерекен те пур.

Чечеке чун çимĕçĕпе танлаштаратăп. Вăл шанса пĕтет, çапах ăшра ырăлăх хăварать. Кĕр енне, тĕслĕхрен, усăлма тухсан хĕм сапакан тĕрлĕ тĕслĕ астрăсене укçаллах туянатăп.

Кăçал тăван тăрăхра – Етĕрне районĕнчи Хурамалăхра – мальва лартса çитĕнтересшĕн. Çынсенне куртăм та – хитрелĕхĕпе тыткăнларĕ. Вăррине хатĕрлесе хунă ĕнтĕ.

Çулла чечеклĕ кĕпе тăхăнса çӳреме юрататăп. Вăл кăмăла уçать. «Чечеклине суйла», – çи-пуç шкапне уçнине курсанах чупса пырать мăнукăм. Пĕчĕкскер çак илеме хаклама пĕлет.



**Светлана ПЕЧНИКОВА, эстрада юрăçи:**

– Çĕнйĕркелӳ тапхăрĕнче пулас мăшăрăм 3 кĕлчечек парнелени асран тухмасть. Ун чухне чечек çыххи илесси пирки шухăшламан та. Кĕлчечек те, хризантема та юрататăп. Тепĕр тесен, кашни чечек хăйне май хитре, чуна çывăх. Хĕрарăмсен уявĕнче тюльпансем уйрăмах капăр. Халĕ тем тĕрлине те – кăтрашкине, тĕрлĕ тĕслине – тупса илме пулать. Кайран çеçпĕл, лантăш... çуралма пуçлаççĕ. Пĕтĕм тавралăх тĕрлĕ тĕспе витĕнет.

Алла чечек тытсан çутçанталăк вăраннăн туйăнать. Хăпартлантарать, хавхалантарать вăл. Сумлă уявсенче мăшăрăм чечек çыххипе савăнтарать паллах. Ун аллинчен кирек мĕнлине илме те кăмăллă. Ытти кун вара ăна ахалех тăкаклантарас килмест. Çемье бюджетне те перекетлемелле. Эпир, сцена çине тухакансем, чечексĕр пурăнмастпăр. Çакăншăн концерта килекенсене пысăк тав. «Ĕнер те чечек çыххи парнеленĕччĕ, паян та, ахăртнех, çав илемпе кăмăла çĕклĕç», – пăхатăп упăшка çине йăл кулса.



**Надежда КУЗЬМИНА, Чăваш академи драма театрĕн артистки:**

– Уявра та, ытти чухне те юратнă çын чечек пани мар, тимлĕх уйăрни паха. Ăшă сăмах калани хаклă. Пĕрпĕринчен аякра чухне те манманни, асĕнче тытни, куллен çепĕç те ачаш сăмахсем çырни – парне. Паллах, чечек çыххи хĕрарăм кăмăлне пушшех çемçетет, хăпартлантарать. Анчах урăх парнепе те çырлахатпăр эпир. Чунран сĕнсен хăть те мĕнли те савăнтарать.

Куракансем чечекпе тăтăшах тав тăваççĕ. Çавăнпах пирĕншĕн – артистсемшĕн – ку парне çителĕксĕр теме çук. Ытларах вара кĕрен кĕлчечеке кăмăллатăп. Савни вара шуррисене юратать – çавсене туянать. Паллах, вĕсене те хаваспах йышăнатăп. Пĕр пăтăрмах та пулса иртнĕччĕ-ха. Концертра хаклă çыннăм шăпах шурă кĕлчечек çыххи парнелерĕ. Уяв вĕçленсен эпĕ ăна аппана патăм. Çакна савниçĕм асăрханă. Кӳренчĕ пулмалла...



**Алина ИВАНОВА, хăвăрт утассипе Европа тата тĕнче чемпионĕ, ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ:**

– Чылай хĕрарăм чечек панине типпĕн йышăнать. Эпĕ вара кун пек парнене лайăх енчен çеç хаклатăп. Уявра çеç мар, хĕрарăмсене сăлтавсăр та савăнтармалла тесе шухăшлатăп. Хĕрĕм Катя виççĕре чухне пулса иртни асăмрах. Уяв ячĕпе парне тума мăшăрăм чечек лавккине илсе кĕчĕ. Ман валли кĕлчечек туянчĕ. Тĕпренчĕкĕмĕре пĕр-пĕр илемлĕ тетте туянса парас тенĕччĕ. Вăл вара ăна те чечек парнелемеллине калать. Тюльпан туянас терĕмĕр те – кĕлчечек кирлĕ тет. Пĕррепе çырлахмасть тата. Çапла лавккаран пĕчĕкскер валли те пилĕк чечекрен пухнă çыхă илсе тухрăмăр. Çапла çав, илем патне хĕрсем ачаранах туртăнаççĕ.

Çулла-кĕркунне урамра кинемейсем те тĕрлĕ чечек сутаççĕ. Вĕсене час-часах туянатăп та ватă аннемĕрĕн пӳлĕмне лартатăп. Тăкакланма кирлĕ мар тет хăй, çав вăхăтрах савăнать те. Тĕрлĕ чечек сутаççĕ-çке, çулла вĕсем хаклă та мар.

Паллах, киле таврăнсан сĕтел çинче чечек çыххи ларнине курсан хăть те мĕнле хĕрарăм та хăпартланать. Чылайăшĕ чечек упранмасть, асра юлмасть теççĕ. Апла мар çав. Шансан та парне асра юлатех. Хăнана кайсан та чылай чухне чечек туянатпăр вĕт. Чечек кирлĕ маррине арçын укçине перекетлес тĕллевпе те калать-ха хĕрарăм. Çемье бюджечĕ тăкакланать-çке. Анчах ку парне тĕлĕшпе тăкакланмалла мар. Арçынсем укçине эрех-сăра ĕçсе, пирус туртса нумай пĕтереççĕ. Çавăн вырăнне хĕрарăма савăнтармалла та...

**Чиперуксене уяв умĕн**
**Елена АТАМАНОВА, Марина ТУМАЛАНОВА,**
**Татьяна НАУМОВА чăрмантарнă.**



АСĂРХАНĂР!

# Урнă тилĕ никамран та хăрамасть



**Пирĕн тăрăхра уртаракан чир сарăлни сисчĕвлентерт. Усал çак хыпар Мускава та çитнĕ. Ахальтен мар чăваш тиллисем çинчен çĕршыв шайĕнче калаçаççĕ, республикăри лару-тăрăва тишкереççĕ.**

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев эрнесерен иртттерекен канашлура та çакăн тавра сăмах пуçарнă, ку енĕпе çине тăрса ĕçлеме ыйтнă.

...Нумаях пулмасть Çĕмĕрле районĕнчи Тăванкассинчи пĕр хуçалăха каçхине тилĕ пырса кĕнĕ. Малтан индокăвакала çинĕ, унтан чăхха ярса тытнă вăл. Сас-чĕве илтсе картишне кил хуçи тухнă. Арçын сăтăрçа алăпах тытса кролик читлĕхне хупса лартнă. Республикăри ветеринари лабораторийĕнче иртттернĕ тĕпчев вăрман чĕрчунĕ урнине палăртнă.

Çав тăрăхри Мисчĕре тилĕ сăнчăрти йытта тапăннă. Ку хутĕнче те чирлĕскер никамран та хăраман. Кил хуçи чĕнмен хăнана патакпа çапса вĕлернĕ.

Шупашкар районĕнчи Вăрăмту ялĕнче те урнă тилĕ кушака çыртнă. Хăй картишĕнчен тухса тарнă. Кăштахранах хуçисем кушакăн куçĕ пӳрленнине асăрханă та ветеринартан пулăшу ыйтнă. Анчах тилĕпе вăй виçнĕскер килти çамрăка тата тепĕр кушака чăрмалама ĕлкĕрнĕ.

Чăваш Республикинчи патшалăх ветеринари служби сайчĕ куллен çĕнĕ хыпарпа тулсах пырать. Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 3-мĕшĕ тĕлне чир пуçаракан 20 чĕрчуна шута илнĕ /вĕсенчен 17-шĕ – тилĕ/. Пĕлтĕр 15 тĕслĕх пулнă. Хальхи вăхăтра çак служба ял тăрăхĕн администрацийĕн ĕçченĕсемпе пĕрле килсĕр чĕрчуна тытассине йĕркелесе пырать.

Алексей Спиридонов ветеринар патшалăх учрежденийĕнче кашни йытă валли уйрăм карточка уçмаллине аса илтерет. Шута илнĕ май чĕрчунăн сывлăхне тĕрĕслĕç, кирлех пулсан ăна прививка тăвĕç.

Чăваш Республикинче ытларах чухне чирлĕ тилĕ шар кăтартни паллă. Ăна пула вирус вăрмантан яла пырса кĕрет.

Уртаракан чир çулталăкăн уйрăм тапхăрĕнче уйрăмах алхаснине палăртмалла. Юлашки тăватă çулта, сăмахран, февраль-март уйăхĕсенче тата октябрьте вирус вăй илнĕ. Çакăн сăлтавĕ ансат: çанталăк ăшăтма пуçласан чĕрчун пĕтĕçет, кĕркунне вăйланнă çамрăк ăру пĕр çĕртен тепĕр вырăна куçма пуçлать.

ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх служби пуçлăхĕ Владимир Кузюков февралĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 16-мĕшĕчен тилĕ тата кашкăр йышне чакарас тĕллевпе ятарлă мероприятисем йĕркелесси çинчен каласа кăтартрĕ. Чĕрчуна саккун хирĕçлемен кирек мĕнле мелпе те тытма юрать. Малтан, паллах, сунара тухма ирĕк илмелле.

**Республикăра кашни 4-8 çулта уртаракан чирпе нушаланакансен йышĕ пысăкланать. Тĕслĕхрен, 1976-1978, 1984-1990, 1999-2010 çулсенче вирус вăй илнĕ. Сăмах май, 2007 çулта чирлĕ 55 чĕрчуна тĕп тунă. 1980-1983, 1993-1997 çулсенче вара урнă пĕр чĕрчуна та шута илмен.**

ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх служби йĕркеленипе 2000-2004, 2007-2008 çулсенче тилĕ пурăнакан вырăнсенче апатпа пĕрле вакцинăсем хурса панă. Пурпĕрех çакă курăмлă витĕм кӳмен. 2011-2013 çулсенче хăватлăрах вакцинăпа усă курма пуçланă. Сăмах май, вăл пур чĕрчунпа кайăкшăн та сиенсĕр. Çапах чире тĕппипех çĕнтерме май килмен. Пĕлтĕр ăна туянмашкăн федераци бюджетĕнчен укçа уйăрман. Специалистсен шухăшĕпе, чир сарăлни тилĕсене вакцинацилеменнипе те çыхăнма пултарнă.

Владимир Николаевич вăрманта асăрханулăх çинчен манмалли марри çинче чарăнса тăчĕ. Тилĕ-кашкăра тĕрĕслемешкĕн ветстанцие леçмелле.

Республикăри тилĕ йышне мартапрельте палăртĕç. Владимир Кузюков хăш-пĕр районта урнă тилĕ тытнăшăн укçа пама тĕллев тытнине палăртрĕ. Лару-тăрупа кăсăкланса Муркаш районĕпе çыхăнтăмăр. Администрацин экономика пайĕн ĕçченĕсем ăнлантарнă тăрăх, вĕсем пĕлтерĕшлĕ çак ыйтăва хускатнă. Анчах хальлĕхе ку тĕллевпе хыснаран укçа уйăрман. Малашнехи пирки калама тăхтарĕç.

Çапах та сунарçăсем мĕншĕн тилĕ сахал тытаççĕ? Хĕрарăмсем модăран юласшăн мар – шашкă, мутон... çипуçĕ тăхăнаççĕ. Çавăнпах тилĕ кĕрĕкĕпе калпакĕ çĕлеттеркен çукпа пĕрех. Апла тăк, паллах, унăн тирĕ йӳнĕ.

Республикăри гигиенăпа эпидемиологи центрĕн тухтăрĕсем Иван Зайцевпа Евгений Работаев чирлĕ чĕрчун çыртсан çийĕнчех тухтăрпа çыхăнмаллине аса илтереççĕ. Вăл урнине хирĕç прививка тăвĕ. Унсăр пуçне сурана супăнь шывĕпе çумалла, йод сĕрмелле.

Вирус сарма пултаракан килти чĕрчуна тӳрех тĕп тума юрамасть. Ăна 10 кунлăха хупса сăнамалла. Енчен те вăл сывах тăк – 3 хут прививка туни çителĕклĕ. Чирлĕ чĕрчуна çийĕнчех вĕлерме тивет. Вирус лекнĕ çынна чĕрчун çыртнă хыççăн 14-мĕш, 30-мĕш, 90-мĕш кунхине татах укол тăвĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

ПУТИШ

Пĕр кунхине, арăм мухмăрпа аптăранăран, ял лавккине таплаттартăм. Кирлине туянса каялла çул тытрăм кăна – шăлавар шăтăрт! турĕ. Ак, тамаша! Шăлаварăн тĕпĕ икке пайланнă иккен. Çынсем ан курччăр тесе килелле çиçĕм пек васкарăм.

Кил картине кĕмелли алăка уçма тăтăм кăна, хыçалтан такам кĕрслеттерчĕ. Малалла вирхĕнсе кайрăм та пуçпа алăка пырса çапăнтăм. Аларан сумка тухса ӳкрĕ. Пуç анкă-минкĕ пулса кайрĕ. Тăна кĕрсен сумкăна çине.

– Пирĕн ăна ик енчен те çавăрса илмелле, – текех ăнлантарса тăмарăм, малалла тапса сикрĕм. Эсрелĕ, ман шухăша сисрĕ пулмалла, тата хытăрах чупма пуçларĕ. Арăмпа иксĕмĕр ăна хăваласа çитесчĕ тесе илтерсе пыратпăр кăна.

Çапла урам вĕçне çитрĕмĕр. Вăкăр чарăнма шухăшламасть те. Унччен те пулмарĕ, пуçне пĕррех силлесе илчĕ – сумка шаплатса ӳкрĕ. Чăнкăр! илтĕнчĕ сасă.

# Карчăка юраймарăм...

илес тесе пĕшкĕнтĕм – умра нимĕн те çук. Мĕн амакĕ? Ăçта кайса кĕчĕ? Хыçалалла çаврăнса пăхрăм та чутах кутăн кайса ларattăм. Ара, манăн сумка вăкăр майраки çинче çакăнса тăра парать. Хуллен-хуллен утса ун патне çывхарма пуçларăм.

– На! На! Кил кунтарах, кил, – тесе аллăма сумка патнелле тăсатăп. Вăл пур, мур илесшĕ, ман сăмахсене хăлхана та чикмерĕ. Вăрăм хӳрине тăратрĕ те, сумкăри кĕленчене чăнкăртаттарса анаталла тапса сикрĕ.

– Карчăк! Хăвăртрах тух-ха! – кăшкăратăп хам.

Мăшăрăм çав самантрах пӳртрен вирхĕнсе тухрĕ.

– Мĕн кăшкăратăн çак эсĕ? – сехĕрленсе ыйтрĕ вăл.

– Вăн çавăнталла пăх-ха! – пӳрнепе тĕллесе кăтартрăм мăшăрăма.

– Мĕн тăвăпăр? – кăн-н пăхрĕ ман

– Паян киле ан пынă пултăр! – тесе арăм кил еннелле таплаттарчĕ.

Эпĕ вара сумка ӳкнĕ вырăна çитсе тăтăм, темиçе пая пайланнă кĕленче ванчăкĕсене пĕшкĕнсе пуçтарма пикентĕм.

– Ха-ха! – кулни тăруках хăлхана кĕрсе кайрĕ. Çав сасса илтсе каялла çаврăнса пăхрăм. Тахăш самантра ман хыçа килсе тăнă хĕрарăмсем варĕсене тытса ахăлтатаççĕ.

– Ваçça! Хыçалти санăн пĕтĕмпех курăнать, – ихĕреççĕ хăйхисем.

Вăкăр хыççăн хăваласа çурăк шăлавар çинчен мансах кайнă! Хĕрарăмсем çаплах ахăлтатма чарăнманран питĕм писсе çитнĕ çырла евĕр пĕçерсе кайрĕ. Тек тытăнса тăмарăм, хам та кил еннелле мулкач пек тапса сикрĕм.

**Юрий КОРНИЛОВ.**
Элĕк районĕ.

ÇЫРУ ЙĔРĔПЕ

# Черете тăмалла

**"Чăваш хĕрарăмĕн" январĕн 31-мĕшĕнче тухнă 3-мĕш номерĕнче "Аппăшĕ çăвăннине шăллĕн пăхса лармалла-и?" материал пичетленĕччĕ. Чун ыратăвне пайласа пĕлтернĕ çырăва Муркаш район администрацине ярса патăмăр. Редакцие çитнĕ хуравпа сире те паллаштаратпăр.**

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

## Аппăшĕ çăвăннине шăллĕн пăхса лармалла-и?



Çырма мĕн хистерĕ-ха? Чун ыратни. Хаçат-журнала темĕнле йывăр шăпаллă çын та çырать те...

Мĕнрен пуçлам-ши? Шупашкарти ача çуратмалли çуртра Муркаш районĕнчи çамрăк хĕрарăмпа пĕр палатăна çаклантăмăр. Эрнере тем пирки те калаçрăмăр. Манăн ача йывăр çуралнăран пурăнаймарĕ. Пĕрле выртакан хĕрарăм пепкине пăхса лăпланма тăрăшаттăм.

Унтанпа нумай çул иртрĕ. Пĕрле ача çуратнă хĕрарăм патне хăнана кайса курас килчĕ. Çавăнпах çула тухрăм та. Муркаша çитме вăхăт нумай кирлĕ мар. "Кирпĕч завочĕ" чарăнура ансан та икĕ хутлă хĕрлĕ кирпĕч çурта шыраса тупма йывăр пулмарĕ. Анчах çурта кĕрсенех сăмсана таса мар шăршă çапрĕ. "Мĕнле пурăнаççĕ-ши?" – тесе иккĕмĕш хута хăпартăм. Алăка уçса кĕрсенех тĕлĕнтĕм: пĕчĕк пӳлĕмре пилĕк çын кун кунлать. Çакăнтах пĕçермелле, çăвăнмалла. Нимĕнле услови те çук. Юрать шыв кĕрсе тухать. Урайĕнче çулталăкри ача чупать. Пӳлĕмĕн пĕртен-пĕр чӳречи урамалла тухать. Маччаран шыв юхнăран ун умне те ача шыва кĕртмелли ванна лартнă. Пӳлĕм кĕтессисем кăвакарнă. Ачисене канма та вырăн çук. Çывăрма пĕр вырăнпа пĕр диван лартнă: хĕрарăм кĕçĕннипе – кравать çине, виçĕ ачи диван çине выртаççĕ. "Яла кайса пурăнма май çук-им?" – явăнчĕ пуçра шухăш...

Çамрăклах, 14 çулта, ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă хĕрарăм. Пиччĕшĕпе иккĕшне кукамăшĕ пăхса ӳстернĕ. Çирĕме çитсен пĕр çамрăкла явăçса ача çуратнă. Çавăн чухне пӳлĕм панă та ăна. Кăштахран иккĕмĕшĕ çуралать. Пурăна киле арçын эрех ĕçме пуçлать. Çавăнпах пĕр вăхăтран хĕрарăм тепĕр арçынпа паллашать: виççĕмĕш пепке кун çути курать. Ку та эрех ĕçме тытăнать. Виçĕ ачине мухмăр шăршине сывлаттарас килменрен ăна та кăларса ярать амăшĕ. Пĕччен йывăр пулнăран тепĕр арçынпа, çамрăк чухнехи тусĕпе, çывăхланать. Тăваттăмĕш ача та çуратать. Пĕчĕк пӳлĕмре ахаль те тăвăр пулнăран арçын килсе çеç çӳрет. Пĕри районта, тепри ялта пурăнсан уйрăлса каясси те çавăнтах-çке, çавăн... пĕрлех пурăнтарас килет вĕсене манăн...

Эпир калаçса ларнă хушăра... пĕрин хыççăн тепри... вуннăмĕш класра вĕ... тата пĕрремĕшĕнче. А... рах çи-пуçне улăштарч... урăхла майĕ те çук. Çике... кайрĕ. Ывăлĕсем урок... вĕренме майĕ те çук: а... тумланăран савăтсем ... кĕнеке-тетраде пырса... хушшине те иккĕн ...

Çаксене пĕтĕмпех сăнанă май чун ыратрĕ. Нумай ачаллă çемьесене пулăшмалла теççĕ. Çырăва Муркаш район пуçлăхĕсем çеç мар, республика ертӳлĕхĕ те курасса шанас килет.

Ачасем пирĕн пуласлăх тетпĕр. Пĕчĕк пӳлĕмре 16 çулти аппăшĕ çăвăннине арçын ачасен пăхса лармалла-и? Çакăн пек нуша куракансем татах та пулĕ. Пулăшасчĕ.

Ятăма кăтартманнин сăлтавĕсене ăнлан... тетĕп.

РЕДАКЦИРЕ...

"2014 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче çакăн пек çырăва Гавриловсен çемйине те ярса панă.

Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕн 2-мĕш тата 3-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн, кодексăн 49-мĕш статйинче асăннă çурт-йĕре тивĕçме ирĕк пур граждансем çурт-йĕр черетне тăма пултараççĕ. Асăннă черетре тăма право пур тăк çын хăйĕн ирĕкĕпе черете пĕр е пĕтĕм сăлтавпа тăма пултарать.

Пурăнмалли кĕтес çуккипе нушаланакансене çынсем ыйту çырнине кура вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем шута илеççĕ. Ыйтăва е харпăр хăй тăрăхĕнчи асăннă органа пырса, е хăть те хăш нумай функциллĕ центрта çырмалла.

Муркаш районĕнчи Муркаш ял тăрăхĕн администрацийĕн 2014 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнчи постановленийĕпе килĕшӳллĕн, Гавриловсен 5 çынран тăракан çемйине çурт-йĕр ыйтăвĕ çивĕччисен йышне кĕртме палăртнă.

РФ Çурт-йĕр кодексĕн 57-мĕш статйипе килĕшӳллĕн ыйту çырнисене çурт-йĕрпе черете хăçан тăнине кура, статьяра асăннă 2 тĕслĕхрисĕр пуçне, тивĕçтереççĕ.

Муркаш район администрацийĕ çемьене çурт-йĕрпе черетсĕр тивĕçтерме ирĕк пуррине çирĕплетекен е патшалăхăн ытти программине хутшăнма документсем тăратма ыйтнă. Анчах Гавриловсем хутсене паянхи кунччен тăратман-ха.

**Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Р.Н.Тимофеев".**



## ЫРКĂМĂЛЛĂХ КĔТЕСĔ



*Хисеплĕ вулакансем! Асăрхарăр-и? Хаçатра "Ыркăмăллăх кĕтесĕ" уçма шухăшларăмăр. Ахăртнех, килте нумайăшĕн кивĕ е усă курман ытлашши хатĕр-хĕтĕр /сĕтел-пукан, ача-пăча çи-пуçĕ.../ пур, вĕсене пирĕн хаçат урлă вырнаçтарма май килĕ. Çынна ырă тума, пулăшма васкакансенчен пĕлтерӳсем кĕтетпĕр. Телефон номерне тата хăвăр ăçта пурăннине кăтартма ан манăр.*

**● Шупашкарта пурăнатăп. Тĕслĕ телевизор сĕнетĕп.**

**● Виçĕ çулти хĕрача валли – шупка хĕрлĕ тĕслĕ куртка. Тел.: 8-961-348-19-01.**

*Асăрхăр! Çак япаласене ахалех, укçасăрах, паратпăр.*

*Пĕлтерӳсене те – эсир çав япаласене ахалех пама хирĕç мар пулсан – хаçата тӳлевсĕрех вырнаçтаратпăр. Ыйтусем пулсан редакци телефон номерĕсемпе шăнкăравласа пĕлмелле.*

## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Пулă пловĕ



**Пуçлă 1 сухан, 1 кишĕр, 1 пылак пăрăç, 500 грамм пулă, 1 стакан рис, лимон сĕткенĕ, тăвар, пăрăç, техĕмлĕх, пахчаçимĕç бульонĕ кирлĕ.**

Шăмминчен тасатнă пулла вакламалла, тăварпа, пăрăçпа, лимон сĕткенĕпе пăтратмалла. 15 минутран ăшаламалла.

Кишĕре теркăламалла, сухана – çурма çаврашкан, пăрăçа пĕрчĕлесе турамалла. Пахчаçимĕçе çемçеличчен ăшаламалла, тăварпа пăрăç сапмалла. Ун çине пулă хумалла, бульон, рис ямалла, техĕмлĕх хушмалла. Плова вăйсăр çулăм çинче 30 минут пĕçермелле.

### Çĕрулмипе кăмпа торчĕ

**Пашалу валли 1,5 килограмм çĕрулми, 3 апат кашăкĕ крахмал, 1,5 чей кашăкĕ тăвар, техĕмлĕх кирлĕ.**

**Ăшне хума 500 грамм шампиньон, 500 грамм сухан, тип çу, тăвар хатĕрлемелле.**

Вĕттĕн туранă суханпа кăмпана тип çупа ăшаламалла. Теркăланă çĕрулмие 5 минутлăха вĕри шыва ярса лартмалла. Сăрхăнтарсан крахмал, тăвар, техĕмлĕх хушмалла.

Çĕрулмипе кăмпана пергамент хучĕ çине черетлесе хумалла. Çиелтен тип çу сирпĕтмелле, фольгапа витмелле. Торта духовкăра пĕçермелле.

### Панулми квасĕ

**1 литр панулми сĕткенĕ, 1 стакан сахăр, 2 чей кашăкĕ кофе, 1/2 чей кашăкĕ типĕ çĕпре, 3 литр шыв кирлĕ.**

Ăшă шывра çĕпре, сахăр, кофе ирĕлтермелле. Панулми сĕткенĕ ярса талăк йӳçĕтмелле. Кваса сивĕтмĕшре упрамалла.

### Çырла кукăлĕ

**Чуста çăрма 1 стакан шыв, 10 грамм типĕ çĕпре, 1/4 стакан сахăр, 1 чей кашăкĕ тăвар, 5 апат кашăкĕ тип çу, 4 стакан çăнăх кирлĕ.**

**Ăшне хума 0,5 килограмм шăн çырла, 200 грамм сахăр, 2 апат кашăкĕ крахмал хатĕрлемелле.**

Ăшă шыва çĕпре, 3 апат кашăкĕ сахăр, 1/2 стакан çăнăх ярса пăтратмалла. 15 минутран юлашки сахăрпа çăнăх, тăвар, тип çу хушса чуста çăрмалла.

Ирĕлтернĕ çырлана сахăрпа, крахмалпа пăтратмалла. Чустан пĕр пайне çатмана сармалла. Ун çине çырла хумалла. Ăна чустан тепĕр пайĕпе витмелле. Çырла кукăльне духовкăра 1 сехет пĕçермелле.

### Кавăнпа лимон

**200 грамм кавăн, сахăр çăнăхĕ, чĕптĕм корица, 2 касăк лимон кирлĕ.**

Кавăна фольга çине хумалла, сахăр çăнăхĕ, корица сапмалла. Çиелтен лимон касăкĕсем хумалла. Фольгапа чĕркенĕ кавăна 30 минутлăха духовкăна лартмалла.

### Цитрус лимоначĕ

**4 лимон, 1 апельсин, 150 грамм сахăр, пăр тăваткалĕсем, 1 литр шыв кирлĕ.**

Лимона – 4, апельсина 6 пая касмалла, вăррине кăлармалла. Лимона, апельсина, пăра, сахăра блендерпа пăтратса вĕтетмелле, шыв хушмалла. Сĕтел çине лартиччен хутăша ала витĕр кăлармалла.

### Пулă яшки

**1,5 банка пулă консерви, 3-4 çĕрулми, 100 грамм вир кĕрпи, 1 кишĕр, пуçлă 1 сухан, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Кастрюльти вĕрекен 3 литр шыва тăваткалласа туранă çĕрулми, вир кĕрпи ямалла. 20 минут пĕçермелле.

Вĕттĕн туранă суханпа теркăланă кишĕре тип çупа ăшаламалла. Пахчаçимĕçе, пулă консервине яшкана хушмалла. Вĕреме кĕрсен çулăма сӳнтерме юрать.

## ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ

# Симĕс сухан



**Чӳрече çинче симĕс сухан ӳстересси çăмăл мар. Çавăнпах чылайăшĕ ку ĕçе пуçăнмасть те. Сухан часах çĕрме тытăннăран пӳлĕмре тутлă мар шăршă сарăлать, вĕтĕ шăна та тухать.**

Нумаях пулмасть пӳлĕмрех симĕс сухан ӳстермелли çĕнĕ меслет пирки илтрĕм. Сухана шыв лекмесен вăл пăсăлмасть иккен. Çимĕç шыв çийĕн 5-10 миллиметрта вырнаçсан та тымар ярать. Ку меслетпе усă курма лавккара çăмарта сутакан пластмасса савăт аван. Унăн пĕр пайне тымар валли шăтăк шăтарса çăмарта вырăнне теçетке сухан вырнаçтармалла. Теприне шыв яма усă курмалла. Сухан шыва ан путтăр тесен икĕ пайĕ хушшине пĕр-икĕ çĕртен урлă турпас таврашĕ хумалла. Сухана малтан талăк ăшă шывра ислетсен те юрать. Çапла пĕр-икĕ эрнерен чӳрече çинчех симĕс сухан ешерме пуçлĕ. Çĕрĕк шăршă, чăн та, тухмасть. Çав вăхăтрах кун пек лартнă ешĕл çимĕç чечексен хушшинче те аван курăнать.

**ВАЛЕНТИНА.**
Шупашкар хули.

## ПĔЛЕС КИЛЕТ

# Кĕмĕл çĕрĕ хуралчĕ

**Эпĕ питĕ кĕмĕл эрешсем юрататăп. Ĕлĕк вĕсене яланах çăвăнмалли гельпе е шăл пастипе тасатаканччĕ. Манăн çĕрĕ palăрмаллах хуралчĕ, эпĕ ăна хальхинче те ытти чухнехи пекех тасатрăм, анчах тепĕр эрнерен вăл каллех тĕссĕрленчĕ. Тен, эсир мĕн те пулин сĕнетĕр?**

**СВЕТЛАНА В.**
Шупашкар районĕ.

Кĕмĕле тасатма йывăрах мар. Çак мелсемпе усă курса пăхма пултаратăр, çĕррĕр йăлтăртатса тăракан пулĕ.

● Çĕрре пĕр сехетлĕхе нашатырь спирчĕпе вĕри шыв хутăшне /1:1 шайлашупа/ ярăр. Хутăш сивĕнсессĕн çĕрре кăларăр та замшпа е çăм пусмапа сăтăрăр.

● Нашатырь спирчĕ вырăнне апат содин хутăшĕпе те усă курма пултаратăр. 2 чей кашăкĕ апат содине 0,5 стакан вĕри шывра ирĕлтерĕр, çĕрре темиçе сехетлĕхе çав хутăша ярăр.

● Кĕмĕл тасатмалли тепĕр мел те пур. Апат содинчен, шăл пастинчен тата нашатырь спиртĕнчен пăтă хатĕрлĕр. Çĕрре çак хутăшпа витĕр, пусмапа е çемçе щеткăпа хуллен сăтăрса тасатăр.

## ÇАМРĂК АШШĔ-АМĂШНЕ

# Пӳрнене çапмасăр...

**Пепке – пурнăç калчи, илемĕ, пирĕн пуласлăх. «Ачасăр кил-йыш тăлăх туратпа танах», – тенĕ ĕлĕк-авалах.**

Ашшĕ-амăшĕ пепкисене юратса пăхать, çĕршыва юрăхлă çын тума ĕмĕтленет. «Лаша пуласси – тихаран, этем пуласси ачаран паллă», – палăртнă ваттисем. Чăвашсем ĕмĕртен ĕçпе пиçĕхнĕ çынна хисепленĕ. Çитĕнсе пыракан ăру ĕçе хутшăнма пуçласан: «Ĕнтĕ пирĕн вăй хушăнчĕ, ура çине тăратпăрах», – тенĕ.

Ачасене пирĕн, ашшĕ-амăшĕн, пулăшса пымалла. Ырă та çепĕç ача лайăх вĕреннипе, япаласене, çи-пуçа йĕркеллĕ тытнипе, ыттисемпе кăмăллă, сăпайлă пулнипе савăнтартăр. Çавнашкалах ача килте те, çын хушшинче те ырă тĕслĕх кăтартни нимрен пĕлтерĕшлĕ.

Пĕчĕкскерсене ача садĕнчех ĕçе хăнăхтармалла. Эпир, воспитательсем, ку тĕлĕшпе тĕрлĕ мероприяти йĕркелетпĕр: пӳлĕмри чечексене шăварма, çĕрне кăпкалатма, çулçисем çинчен тусан шăлма, сĕтел-пукана таса тытма вĕрентетпĕр. Шăпăрлансем воспитательсене пахчаçимĕç ӳстерме, çимĕçе пуçтарса кĕртме пулăшаççĕ.

Хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ ача-пăчине чи ансат ĕçе те явăçтарасшăн мар. Тĕслĕхрен, курткине те, аттине те хăйсемех тăхăнтартаççĕ. Пĕчĕкскер хăех аппаланса пăхтăр.

Ачасем çывăх çыннисенчен тĕслĕх илеççĕ. Çапла, вĕсен тавракурăмĕ килте аталанма пуçлать.

Пире те атте-анне пĕчĕкренех ĕçе вĕрентнĕ. Вĕсене вăй çитнĕ таран пулăшни кăштах та пулин çăмăллăх кӳрессе шаннă. Халĕ хамăн ачасем те çитĕнеççĕ. Мăшăрпа иксĕмĕр вĕсене ĕçе хăнăхтарма тăрăшатпăр. Чи малтанах хăйсен хыççăн тирпейлеме вĕрентетпĕр. Канмалли кунсенче яла çӳретпĕр, асаттепе асаннене кил-çуртра, пахчара ĕçлеме пулăшатпăр.

Пирĕн асатте йывăç-хăмапа ĕçлеме юратать. Вăл пăчкă е мăлатук тытсан мăнукĕсем ун патĕнчен кайма пĕлмеççĕ. Эпĕ вĕсем суранланасран хăраса тăратăп. «Пӳрнене çапмасăр мăлатукпа ĕçлеме вĕренеймĕн», – тет аслашшĕ йăл кулса.

Хăш-пĕр ĕçе вăйă майлă йĕркелесен аванрах. Ытлашши çирĕп пулмалла мар вĕсемпе, унсăрăн ĕçе пуçăнас кăмăл çухалать. Пĕчĕк çитĕнӳсемшĕн мухтаса илме те манмалла мар.

**Ирина ЛЫСОВА.**



## АСĂРХАНĂР!

# Пыл та наркăмăшланать

Нумай вăхăт ăшăра, 25 градусран та ытларах вырăнта, упранă пылри усăллă япаласем пĕтеççĕ те пачах тепĕр май – вăл çын организмĕшĕн сиенлĕ пулса тăрать. Унра наркăмăшлă хутăш – гидроксилметилфурфурол – йĕркеленет. Çакăн пек пылпа çын наркăмăшланма пултарать.

Чи лайăххи – карас пылĕпе усă курни, вăл сиенлĕ тĕрлĕ бактерисене пĕтерет, сурансене те ӳт илтерет.

Ялта пурӑнса нушине самаях курма тиврĕ. Пурте кантурта лараймасть, хӑшĕ-пĕрин фермӑра та ĕҫлеме тивет. Эпĕ – иккĕмĕш ушкӑнран. Утнӑ та утнӑ ферма еннелле, хам утнипех ҫул хывнӑн туйӑнатчĕ. Хĕлле сукмак ан ҫухалтӑр тесе тип армути хуҫса чиксе тухаттӑмӑр – юр вĕҫтерсен те пирĕн йĕр упранса юлатчĕ.

«Саккунсем» улшӑннӑ май ĕҫ вырӑнĕ самаях хĕсĕнчĕ. Колхоз арканчĕ, фермӑна сутрĕҫ. Выҫӑллӑ-тутӑллӑ мĕнле пурӑнӑн? Ĕлĕк те ҫынсем Ҫĕпĕре ҫити ахалех кайман – пурнӑҫ хистенипе. Пире вара нуша халĕ Мускава хӑвалать.

Каламщӑксене, челноксене – пурне те турттараҫҫĕ автобуссем. Чим-ха, чим, мĕн вӑл «челнок»? Ĕлĕк анне ку сӑмаха ҫĕвĕ машини умĕнче ларнӑ чухне асӑнатчĕ. Ай-уй, пурнӑҫран юлнӑ иккен эпĕ! Юрать-ха, ҫĕнĕ сӑмаха ҫынсенчен ыйтса пĕлтĕм. Вӑхӑчĕ те машинӑран хытӑ чупать те, ҫĕнĕ сӑмах та чылай. Пурне те ӑҫтан пĕлсе ҫитерĕн?

Эпĕ те нумай шухӑшласа лармарӑм. Ҫынсенчен ыйткаласа пĕлкелесе упӑшка валли ĕҫ тупрӑм. Тĕрĕсрех, ĕлĕкхи пĕлĕшĕм Мускава ҫӳрекелет тенине илтрĕм те ун патне вĕҫтертĕм. Манӑн упӑшкана та пĕрле илсе кайма тархасларӑм.

– Ахаль тумĕ, тав тӑвĕ, – текелерĕм.

– Юрĕ, юрĕ, ан йĕр-ха. Манпа ниҫта та ҫухалмĕ, – шантарчĕ вӑл.

Лӑштах пултӑм. Киле таврӑнсанах ҫӑмарта тӑвакан пурӑнас чӑххах пусрӑм, вутӑ хутрӑм. Упӑшкана ҫул ҫинче ҫиме кирлĕ-ҫке. Ҫынсем кӑлпассипе ҫӑкӑр кавленĕ чухне манӑн упӑшка чӑх ҫитĕр терĕм. Ыттисенчен мĕнрен кая? Кĕҫех ҫула тухмалла. Эпĕ кутамкка хатĕрлесе те ҫитертĕм.

– Арӑм, – чĕнчĕ мӑшӑрӑм, – ҫур литр та чик-ха. Манса ан кай. Юлташсенчен аван мар унсӑр, ĕҫлеме илсе каяҫҫĕ вĕт, – терĕ.

Ҫапла ҫур литр та чикрĕм.

– Ҫулĕ такӑр пултӑр, ĕҫ-пуҫ ӑнӑҫтӑр, укҫа-тенкĕпех ҫаврӑнса ҫитмелле пултӑрччĕ, – ырӑ сунтӑм.

Упӑшкана ӑсатма чукун ҫул хĕррине ҫитиех кайрӑм. Чун хурланса килнĕрен макӑрма пуҫларӑм. Пĕр арҫын мана:

– Вӑрҫа ӑсатмастӑн пулĕ те? – тесе хучĕ. Чӑнах та, ку сӑмахсене илтсен аванмарлантӑм.

Ун чухне телефонсем пурин те ҫукчĕ-ха, час-часах шӑнкӑравласа калаҫма май ҫукчĕ. Халĕ вӑл ҫукки – тĕлĕнтермĕш.

Ир пулать те каҫ пулать, эрне хыҫҫӑн эрне иртет. Упӑшка Мускавран та ҫитрĕ. Укҫине те илсе килчĕ, нумаях мар та – пирĕншĕн вӑл та паха. Пĕрремĕш хутчен кайнисене нумаях памаҫҫĕ иккен, уйӑх ĕҫленĕшĕн тӳлени унтах юлать. Иккĕмĕшĕнчен хваттер укҫи тытӑнать. Йӳнĕ апат ҫитернĕшĕн те нухрат тытса юлма имемеҫҫĕ. Тата темле «смотрящий» пур тет. Ӑна та тӳлемелле...

Ҫапла упӑшка килет те каять, килет те каять. Эпĕ те – ҫынах. Мӑшӑрӑм улшӑннине сисетĕп, анчах шарламарӑм. Ҫывӑрнӑ вӑхӑтрах шарт! сиксе вӑранма пуҫларĕ. Малашне мĕн хӑтланнине сӑнам терĕм.

Пĕррехинче киле ҫурҫĕр иртсен ҫитрĕ. Чӳречерен шаккасан шартах сикрĕм. Ку вӑхӑтра Мускавран мĕнле ҫитнĕши? Крыльца алӑкне уҫрӑм та – упӑшкаран эрех шӑрши перет. Чутах сӑмса ҫурӑлмарĕ.

– Ывӑтрĕҫ! – терĕ вӑл.

– Мĕнле ывӑтрĕҫ? Камсем? – тӑна кĕрейменрĕм эпĕ.

– Ҫавна та ӑнкараймастӑн, тӑнсӑр хĕрарӑм, киле укҫа памасӑрах ячĕҫ эппин. Улталарĕҫ, ĕҫлени харама кайрĕ, – терĕ.

Ним чĕнме аптрарӑм. Ыйхӑ вĕҫрĕ.

– Кĕсье тĕпĕнче юлнӑ укҫа кӑштах пурччĕ, – тесе лӳчĕркенчĕк, чӑмӑртанчӑк вун тенкĕлĕх укҫасене кӑларса урайне сапрĕ. Ҫурӑм хыҫĕнчи сумкине кĕтеселле вирхĕнтерчĕ те тĕшĕрĕлсе анчĕ. Тӳрех харлаттарма пуҫларĕ.

Мĕн тумалла? Мĕнле пурӑнмалла? Пуҫра урлӑ-



# Мускав «урокĕ»

пирлĕ шухӑш арпашӑнчĕ. Ирхине упӑшка витрери шыва куркапа ӑса-ӑса ĕҫрĕ те сумкине шырама пуҫларĕ. Мухмӑрлӑскерне кĕтеселле кӑтартрӑм.

– Арӑм патне кучченеҫсĕр епле килĕн? – текелесе сĕтел ҫине темле шӑршлӑ эрех кӑларса лартрĕ, ҫисе ярайман чӑх тукмаккине кӑларчĕ. – Килсе лар юнашар. Эпĕ ҫитнине уявлар. Упӑшку пушӑ алӑпа килмен, Мускав кучченеҫĕ илсе ҫитерне, – терĕ.

– Кун пек шӑршлӑ эрехпе ҫӑвара вараламастӑп та, – хуравларӑм хайхискерне.

Эпĕ каланине вӑл хӑлхине те чикмерĕ пулас.

– Манӑн тата хитре журнал та пур. Ятарласа илсе килтĕм, – терĕ те сĕтел ҫине кӑларса хучĕ. – Мĕнле чипер майрасем, купарчисем... – текелесе каҫӑхса кайсах пӑхса ларать манӑн упӑшкам. – Мускавра чиперккесен телефон номерĕсем таҫти хаҫат-журнална та пур. Кирлĕ тĕк шӑнкӑравла ҫеҫ, – пуплет хӑй. – Эпĕ шӑнкӑравласа та пӑхрӑм. «Сире епле тупмалла?» – тесе ыйтсан: «Эпир таҫта та», – хуравларĕҫ трубка тепӗр вĕҫĕнче, – калаҫать упӑшкам.

Алхассах кайнӑ-ҫке ку! Манран куласшӑн пулмалла! Питĕ тарӑхрӑм.

– Тата Мускавра Ленинградка ҫулĕ пур. Унта укҫа илсен юлташсемпе такси тытсах кайрӑмӑр. Ай-уй, мĕн чухлĕ хитре хĕр унта! Суйла кӑна. Укҫу пулсан хӑшĕ кӑмӑла каять – ҫавӑ санӑн, – сӑмахлать шӑршлӑ эрех ĕҫсе ӳсĕрĕлнĕскер. – Тем тума та пĕлеҫҫĕ, хӑйсен ĕҫне лайӑх пурнӑҫлаҫҫĕ, – сӳпĕлтетет киккирикĕ хĕрнĕ упӑшка. – Унта вĕсен «амӑшĕ» те пур. Ӑна пӑхӑнмалла. Пур ыйтупа та ун патне пымалла.

Пĕрре ҫеҫ лекмен курӑнать ку вырӑна – йĕркине пĕлет. «Акӑ ӑҫта «ывӑтнӑ» сана!» – ҫиҫĕм евĕр вĕҫрĕ шухӑш. Эппин, юххасемпе аташса укҫасӑр юлнӑ манӑн арҫын! Туса паратӑп сана савӑк пурнӑҫ! «Тархаслӑн, ӳкĕтлĕн – каҫармастӑп», – шухӑшларӑм та сада чечек шӑварма тухрӑм. Шĕвекпе минренĕ арҫынсене хитре купарчаллӑ майрасем сахал мар юсаҫҫĕ пулмалла. Юрать-ха, куҫ уҫӑлса ҫитнĕн туйӑнчĕ. «Юратакан суккӑр», – тетчĕ асанне. Ун чухне ача пулнӑ, сӑмахсен пĕлтерĕшне ӑнланман. Халĕ ватӑ канашĕсем нумай аса килеҫҫĕ. Лайӑх ҫыннӑ вӑл, ӑна ялта халĕ те ырӑпа кӑна асӑнаҫҫĕ.

Сад пахчинче чун уҫӑлать. Шухӑш ыррине кӑна йышӑнать. Епле хитре кунта: кĕлчечек те ҫурӑлнӑ, лили те ман ҫине илемлĕн пӑхать.

– Ан макӑр, ан йĕр, пире куҫҫульпе мар, таса шывпах шӑвар, – тенĕнех туйӑнать. Макӑрас марччĕ-ха, пурнӑҫ малаллах шӑвать. Хамӑн, хамӑн каяс Мускава – ҫуралчĕ шухӑш. Эпĕ ĕҫрен хӑрамастӑп, тиркеместĕп. Вырӑнĕ ҫеҫ пултӑр.

Ҫапла ҫав, пурнӑҫ пĕр пек лекмест. Кама – чӑкӑт, кама – шӑтӑк. Хальхи вӑхӑтра чӑтӑмлӑх кирлĕ. Вӑл енчен аптрамастӑп-ха. Пӳрне те кастарсанах ыратать, пирчет те манӑҫа тухать.

Нумай шухӑшласа лармарӑм. Мускава ҫитме тӑвансенчен кивҫен ыйтма кайрӑм – памарĕҫ. Пĕри те шанмарĕ. Ку хĕрарӑм укҫа ĕҫлесе килессе кĕтсен вӑхӑт нумай иртĕ терĕҫ пулмалла. Тĕнче ырӑ ҫынсӑр мар тетчĕҫ халӑхра – тĕрĕсех. Ырӑ ют ҫын тупӑнчĕ. Иккĕмĕш уйӑхранах укҫине каялла тавӑрса патӑм ӑна. Шанӑшӑн хитре парнепе те тав турӑм. Пĕрремĕш ĕҫ укҫи иличчен йывӑр пулчĕ паллах. «Роллтон» лапшине те шывпа ислетсе сахал мар ҫиме тиврĕ. Анчах пуҫа усман – тӳлеччĕр кӑна.

Пурӑнсан-пурӑнсан лайӑх ĕҫ те тупӑнчĕ. Ҫĕр каҫмалли ҫуртӑн пушаннӑ пӳлĕмĕсенче вырӑнсене улӑштармаллаччĕ, тусан сӑтӑрса тирпейлемеллеччĕ. Хуҫа Мускав майриччĕ, «Мерседесĕпе» те хӑех ҫӳретчĕ. Ун пек йӑлйӑл кулса ҫемҫен калаҫакан пуҫлӑх эпĕ хамӑн ĕмĕрте урӑх курман та. Тулӑх пурӑнсан, юнашар юратнӑ та шанчӑклӑ упӑшка пулсан тарӑхма, кӑшкӑрма, айӑплама сӑлтав та ҫук ҫав. Ҫĕр ҫинче ырӑ ҫынсем пурах. Сутӑ самантсем паян та манӑҫа тухмаҫҫĕ. Пырсанах пĕрремĕш уйӑхра туллиех ĕҫлемен пулсан та укҫине ҫынсемпе танах тӳлерĕ. Яланах ырӑпа та ырлӑхпа пурӑнтӑрччĕ ҫав пуҫлӑх майра. Шел, ҫемйипех Мускавран Франціе пурӑнма куҫрĕҫ. Унта та хӑна ҫурчĕсемпе ресторан уҫнӑ терĕҫ.

Апла пулин те ĕҫсĕр юлмарӑм эпĕ. Урӑх ҫĕре вырнаҫрӑм. Малтанах унта мана «Охрана» тесе ҫырнӑ тум тӑхӑннӑ арҫын тытса чарчĕ. Мĕн сӑлтавпа килнине ыйтрĕ. Ĕҫ шыраса килнине, пуҫлӑхпа курса калаҫасшӑн иккенне пĕлтертĕм. Сĕтел хушшинче мана шыҫмак арҫын кĕтсе илчĕ.

– Здрастье, – терĕм куҫлӑхлӑскерне алӑк урлӑ ярса пуссанах.

– Итлетĕп сире. Мĕнле ыйту? – терĕ хайхискер. Пуҫлӑх калаҫни темшĕн витререн сивĕ шывпа чашлаттарнӑнах туйӑнчĕ. Ырӑ пуҫлӑх хыҫҫӑн усаллине хӑнӑхма хĕн.

– Эпĕ, эпĕ... ĕҫ пиркиччĕ...

– Пире офисра урай ҫӑвакан, кофе хатĕрлекен, эпĕ мĕн хушнине пурнӑҫлакан кирлĕ, – терĕ.

– Юрĕ, килĕшетĕп, – пĕр тӑхтамасӑр калаҫа та хутӑм.

– Апла пулсан хĕрарӑмсен пӳлĕмĕ ҫав кĕтесре вырнаҫнӑ. Пĕлмесен – ыйт. Унта каллĕмаллĕ ҫӳрекен нумай, – тӑнлантарчĕ пуҫлӑх.

Администратор ĕҫе хӑнӑхтарчĕ, пĕлменнине вĕрентрĕ. Ҫапла ĕҫ пуҫланчĕ те. Мĕн хушнӑ – ҫавна тунӑ, каланине – итленĕ.

Ларатӑп ҫапла пĕррехинче. Кĕтмен ҫĕртен алӑк уҫӑлчĕ те пӳлĕме хурал пуҫĕ кĕрсе те тӑчĕ, самаях хĕрĕнкĕ хӑй. Ман ҫине ҫӑтса ярасла пӑхрĕ. Чĕре карт! сикрĕ. Мĕн кĕтет – пĕлместĕп.

– Мĕншĕн тунсӑхласа ларатӑн? Упӑшку кӳрентерчĕ-им? Кунта мӑшӑрĕсенчен тухса тарнӑ е уйӑрлнӑ чиперккесем ҫеҫ килеҫҫĕ. Килте пĕтĕмпех лайӑх пулсан хĕрарӑм ĕҫлеме Мускава ҫити килмест, – терĕ те ман ҫума ҫулӑхма пуҫларĕ. Ҫапах ним чĕнмесĕр ларатӑп. Ыталама пикенчĕ хайхискер.

– Чим-ха, чим, – текелесе аллине хулпуҫҫи ҫинчен илсе ывӑтма тӑтӑм.

– Турткаланмасан, итлесен чаплӑ ĕҫ пулĕ санӑн, – тинкерчĕ ман ҫине хурал пуҫлӑхĕ. – Ҫӳллĕ кĕлеллĕ пушмакпа, кĕске юбкӑпа кӑна ҫӳрĕн. Шалу та пысӑк пулĕ. Арӑма систермесĕр вӑрттӑн еркĕн кӑна пул, – сӳпĕлтетрĕ вӑл.

Ак тамаша! Арӑмне улталасшӑн ват автан! Чыслӑхне ҫухатнӑ иккен ку ҫын! Суять, улталать, еркĕн шырать ват кӑркка! Эпĕ вара шӑши евĕр чĕтресе ларатӑп, сӑмаха та ҫыпӑҫуллӑ аран каларӑм. Алӑкран ҫухалас умĕн те сĕнĕвĕ пирки лайӑх шухӑшлама хушса хӑварчĕ «пуҫлӑх».

Шухӑша путрӑм. Кама калас? Хута кĕрекен никам та ҫук. Кун та, ҫĕр те иртрĕ. Ним курман-илтмен пек ĕҫлетĕп. «Савни» кĕҫ-вĕҫ ача ҫуратакан хĕрарӑм евĕр хырӑмне каҫӑрткаласа унталла та кунталла кумать. Сиcетĕпха: куҫне ман еннелле ывӑтать. Чунри туйӑм та улталамарĕ: кĕҫех кашни пулипулмишĕн тӑрӑнма тытӑнчĕҫ. Китай рисĕн сумкине япаласене пуҫтарса чиксе те хутӑм. Пĕлетĕп: эпĕ кунта паянхи ыран кӑна. Салтак евĕр хатĕр тӑрас пулать.

Кĕҫех кĕсьери телефон шӑнкӑртатрĕ, аслӑ пуҫлӑх хӑйĕн пӳлĕмне пĕр тӑхтамасӑр пыма чĕнчĕ. Йӑпӑр-япӑр ҫитрĕм хушнӑ вырӑна.

– Паянтан эсĕ текех кунта ĕҫлеместĕн. Тĕрĕслеве тухаймарӑн, – терĕ вӑл.

Маншӑн ку сӑмахсем кĕтмен ҫĕртен пулмарĕҫ. Тепĕр тесен, кунтан кайнипе те нимĕн те ҫухатмастӑп.

– Ҫирĕм минутран тухса каятӑп, – терĕм.

Манӑн сӑмахсем уншӑн кĕтменлĕх пулчĕҫ ахӑр, ман ҫине пуҫне тепре ҫĕклесе пӑхрĕ вӑл, тем ҫыраканскер кĕҫех хывӑнса ӳкес пек куҫлӑхне аллипе хӑй вырӑнне вырнаҫтарса лартрĕ. Эпĕ хыҫран алӑка хупса тухса утрӑм.

Кунта мыскарасем эпĕ киличчен те чылай пулкаланӑ тетчĕҫ. Мĕнех, Мускав пысӑк: кӑмӑл пулсан ĕҫ кашни кĕтесрех пур. Кĕҫех урӑххи те тупӑнчĕ, укҫине те ытларах илме пуҫларӑм. Тумланма та ҫитет, киле те пушӑ кĕсьепе кайман. Халĕ манӑн пурте пур – хам валли ҫитет.

Упӑшкапа уйрӑлтӑмӑр – ҫӳретĕрех ҫапкаланса. Пĕрре мар каҫартӑм: ҫук, юсанмарĕ. Кашкӑра епле лайӑх тӑрантарсан та пурпĕр вӑрман еннеллех пӑхать тенĕ халӑхра. Каялла пĕрре мар таврӑнасшӑн пулчĕ – йышӑнмарӑм. Эпĕ те ҫынах, хамран текех култармастӑп. Хайхи яка хуплашкаллӑ моднӑй журнал ҫинчи хитре майрасем ҫине пӑхса ӑмсанса пурӑнтӑр. Мускав укҫи пысӑк урок пулчĕ маншӑн: хама юратма вĕрентрĕ, улталакан, суякан, ҫынна сутакансенчен айккинчен иртме хӑнӑхтарчĕ.

**Галина ҪАВАЛ.**





Лидия САРИНЕ

# Мухмăр яшки

Кам çисе курнă, паллах, пĕлет. Тутлăччĕ вăл яшка. Атте пĕçеретчĕ ăна, мухмăрпа аптăранă чухне. "Керосинка", "керогаз" пурччĕ ун чухне кашни килтех. Вут чĕртсе, хуран çакса пĕçерме пулать-ха та, анчах ăна нумай кĕтмеллеччĕ-çке. Вутти хăçан тивет, яшки хăçан вĕреме кĕрет, мĕн чухлĕ кĕтмелле ăна, ай, Тур-Тур! Чăтма çăмăл тетĕр-и? Мухмăрпа пĕрле хырăм касать вĕт.

Ой, пĕлетĕр-и, пĕррехинче мĕн пулса иртрĕ пирĕн килте? Çуллаччĕ ун чухне. Керогаз çунать. Сисмерĕмĕр те, хайхи хап! анчах тивсе кайрĕ. Крацçынĕ туллирех пулнă-ши, ăна пĕлместĕп. Пӳрт умĕнче çунса лараканскертен тем çӳллĕш çулăм ялкăшма пуçларĕ. Хăраса ӳкнĕскерсем ним тума та пĕлместпĕр, куçсем чарăлнă. Ĕнтĕ пушар тухать, пӳрт те çунса кайĕ! Шăпах атте тултан кĕрет, пăлтăр маччи çӳллĕ, пӳртри пек мар. Пĕчĕкскерсем пĕр çĕре кĕпĕрленнĕ. Атте нумай шухăшласа тăмарĕ, çийĕнчи çӳхе пиншакне хăвăрт хыврĕ те керогаза лап! çеç витсе хучĕ. Çулăм сӳнчĕ. Çавăнтанпа эпир аслисем çук чухне керосинка таврашĕ патне пит пырсах кайман.

Эпир, шĕвĕрсем, атте мĕнле пĕçернине пăхса кăна тăракан пултăмăр. "Аннӳ пĕçерессине кĕтсе илсе пулмасть. Вăл пурпĕр ман пек тутлă пĕçерме пĕлмест", – мăкăртатать хăй. Вут хутмасăр та хатĕр пулмасть чăнах та. Аннен пĕтĕм çемьене тăрантармалла-çке, ăçтан хăвăрт пултăр? Атте вара "мухмăр яшки" текеннине хăйне валли кăна хатĕрлет. Чăланта тем пысăкăш сысна çакăнса тăрать. Атте ăна пуртăпа пĕр яшкалăх касса кĕрет, вĕттĕн турать. Эпир куç сиктермесĕр пăхса тăратпăр.

– Манăн та "мухмăр яшки" çиес килет, – пăшăлтатать шкул çулне çитмен Женя. – Пĕрре çисе курнăччĕ ăна. Тутлă-ă-ă.

– Эпĕ те çисе курнă, – тет Вова, унран аслăраххи. – Ан та кĕт, сана пурпĕр лекмест паян.

– Сана лекет тетĕн-им? – ун çине кăмăлсăррăн пăхса илетĕп çавăнтах. – Женя ахаль те апат тиркет. Кăна çиетех.

Вова чеен пăхса илет те пирĕн çине, вăрттăн кулкалать:

– Атте пуринчен те ытларах кама юратнине пĕлместĕн штоль?

– Пĕлетĕп, – ассăн сывлать пĕчĕк Женя. – Атте Çветлана такамран та ытларах юратать. Вăл ăна платникрен ĕçлесе килсен те ялан канфет çитерет.

Светлана чи кĕçĕнни пирĕн çемьере. Вăл тăватă çулта кăна-ха. Сăнĕпе аттене касса татсах илнĕ. Каçăркка сăмсаллă, хăп-хăмăр куçлă. Икĕ хура çивĕт çивĕтлесе яратчĕ анне. Хĕрлĕ пиçнине куç илмесĕр пăхса тăратпăр. Анне колхоза ĕçлеме кайнă... Кăштахран атте яшкине сыпса пăхать, тăвар хушать. Тепĕртакран пăсланакан çатмана сĕтел çине, хăрăмпа вараланнă хулăн хуплашкаллă кĕнеке çине илсе лартать. Тенкел çинче çур çăкăр выртать, ăна васкамасăр касать. Сĕтел хушшине кĕрсе ларать. Çатмана витнĕ кастрюль хуппине уçать, апата тытăнать. Пĕр кашăк сыпать, тепре. Сăмах чĕнме хăю çитерейместпĕр. Шăллăм сĕтел умне утса пырать, хăюсăррăн çăкăр таткине илет те каллех каялла чакать. Майĕпен типĕ çăкăра чăмлама тытăнать. Атте яшкана пĕр-икĕ кашăк лĕрĕплеттерет, ахăртнех ăшĕ хыпнă, "Ох! Ну, паха-çке", – тет хăй тĕллĕн. Пӳртре шăп. "Мĕншĕн анне килмест-ши?" – пăшăрханатăп эпĕ ăшăмра. Е тата... Светлана ăçта чупса çӳрет-ши? Вăл килсен, тен, пире те лекĕ? Атте пуçне сула-сула аш татăкне чăмлать, вĕри шӳрпе уншăн чухах-мĕн. Каçхине Эрхип кумсем патĕнче ĕçкĕре пулнă-çке вĕсем. Ачасем пулин те ăнланатпăр эпир. Аттене тепĕр кунхине тепле пулсан та вĕри яшка кирлĕ. Пĕр икĕ-виçĕ кашăк сыпса пăхнă хыççăн атте хăю ăна уйрăмах питĕ килĕшетчĕ.

– Керогаз çинче пĕçерни тутлăрах, – тет Вова.

– Уншăн мар, çатмара пĕçернипе.

– Мухмăр яшки вăл, çавăнпа тутлă.

– Манпа ан тавлаш, эпĕ санран аслăрах.

Нумай та вăхăт иртмест, çатмари шыв вĕреме тытăнать. Атте унта çĕрулми ямасть иккен. Ашне нумай тураса тултарать, суханне те çителĕклех ярать. Пӳрте ырă шăршă тухса тулать. Пурте çатмари яшка мĕнле пирĕн çине кăнн! пăхрĕ.

– Халех кĕрсе ларнă пултăр сĕтел хушшине! – терĕ.

Пĕр вăхăт пĕри те ырăнтан хускалмастпăр-ха. Пĕр-пĕрин çине кăнкан пăхкалатпăр. Куçсем сĕтел çинчен каймаççĕ пирĕн. Аттерен хăратпăр эпир.

– Быстро! – тет кил хуçи.

Атте темшĕн пирĕнпе ырăсла калаçма юрататчĕ. Эпир хăпăл-хапăл сĕтел хушшине кĕрсе лартăмăр. Хайхи атте пĕçернĕ "мухмăр яшкине" пĕр самантрах пушатрăмăр. Çатма яшки тĕлĕнмелле тутлă. Чăн та, ашĕ нумай, шӳрпи сахал. Атте çисе те юлаймарĕ. Вăл куç хупса иличчен тенĕ пек эпир çатмана пушатрăмăр та.

– Çийĕр! Çийĕр, – тет атте. Хăй çуллă кашăкне çăварĕпе унтан-кунтан çуллакаларĕ.

– Эсĕ мĕншĕн ашне çеç ăсатăн?

– Çук, эпĕ шӳрпине те сыпатăп, эсĕ вара...

– Ну, юрĕ, эсĕ пĕр турамне, эпĕ теприне.

– Сухан юратмастăп, хăвах çисе яр.

– Атя, çурмалла... Каллех ашне ярса илтĕн.

Аш яшки тĕлĕнмелле тутлă пулчĕ. Тен, пире, шăпăрлансене, тăраниччен çимелĕх çитмерĕ те пуль, апла пулин те эпир питĕ савăннă. Кунтан тутлă апат урăх çинине те астумастăп эпĕ. Атте çине тав туса пăхатпăр. Вăл вара пурне те питĕ ăшă куçпа пăхать. Чĕринче питĕ лăпкă пулас унăн. Сĕтел хушшине чавсаланса ларчĕ:

– Каçхине аннӳ кăмакана шаркку лартĕ, – тет вăл.

Кĕçĕннисем выляма, кулма, тĕпĕртетме тытăнчĕç. Атте кивĕ пиншакне уртса ярса килкартине тухрĕ. Эпĕ сĕтел çинчи савăт-сапана пуçтарма пикентĕм. "Эх, мĕнле тутлă "мухмăр яшки", – шухăшлатăп хам. – Тен, тепрехинче те лекĕ-ха пире".

## САВĂ СĔВЕМĔ



Елена СОБОРОВА

### Хавασлă чунăмра

Пуш уйăхĕ. Хаваслă чунăмра.
Анне сăнарĕ ĕмĕр асăмра.
Ача чухне пуçран лăпканине,
Манма çуках ун çепĕç аллине.

Хавхаланса çыратăп çак сăвва.
Çеçкене ларнă пахчари хăва,
Çурхи илем вăранчĕ çĕр çинче,
Хаваслă шав уяв кĕрекинче.

Сан ятупа хĕвел тухать кулса,
Чĕре хĕмлентĕр савнăçпа тулса.
Сӳнми телей сунар-и пĕр-пĕрне
Шăрантарса тăванлăх юррине.

Анне ăшши – кил-çурт ытамĕнче,
Ачаш кулли – хĕвел ялтравĕнче.
Хисеплесе паратпăр парнесем,
Сăвапĕ шутсăр пысăк аннесен.

Вăрмар поселокĕ

Любовь ЛĔПĔШПИ

### Юрататăп сана, анне…

Ăш сăмахăн пурах-çке асамĕ –
Сипленет чĕрери суран.
Чи юратнă арçыннăн саламĕ
Пуринчен те хакли ялан.
Хăш чухне хуçăлсассăн та кăмăл
Сар хĕвел пек çиçет кулли.
Çавăнпа пурăнмашкăн та çăмăл,
Маншăн вăл – пуринчен хакли!
Чеерехĕн çунать хăмăр куçĕ,
Калăн – икĕ таса çут çăл.
Эп сисетĕп, ун кăмăлĕ уçă,
Тем каласшăн – кулать йăл-йăл.
Акă шăппăн мăйран ыталарĕ,
Сĕртĕнтерчĕ ачаш питне.
Чи юратнă арçыннăм каларĕ:
– ЮРАТАТĂП САНА, АННЕ...

Левтина МАРЬЕ

### Йĕмесĕр... юратаймăн

Ĕçре час-час çумра пулатăн,
Сунатăн сывлăх хăш чухне...
Нивушлĕ чăнахах туймастăн
Сана чунтан эп савнине?..

Эп халĕ те пĕччен çӳретĕп
Шухăшласа пĕр сан çинчен.
Хама вăрçатăп та шеллетĕп,
Шăлатăп куççуле ирччен...

Сан кăкăру çине хурасчĕ
Хăйса хам çамрăк пуçăма.
Пĕр пытармасăр хускатасчĕ
Чуна уçса сăмахăма...

Пăшăлтатса хушса каласчĕ
Епле сана юратнине.
Пĕр сукмакпа утса тухасчĕ
Сăмах чĕнмесĕр пĕр-пĕрне...

Тĕлĕнмелле!.. Паян ав чĕнтĕн
Каç пулсанах тĕл пулăва...
Мана, тен, эс килĕштеретĕн?..
Тĕв турăн çавăрма йăва?..

Тĕл пултăмăр... Тăрук асамлăн:
«Качча тухсам мана...» – тесе
Эс хыттăн-хыттăн ыталарăн,
Эп ятăм хайхискер йĕрсе...

Мĕн-ма-ши эс пĕр систермесĕр
Çӳрерĕн вăтанса çумра?..
Пĕлменччĕ... Юрату йĕмесĕр
Пулмасть-ши ик вĕри чунра?

* * *

Эс астăватăн-и çавна?
Ăрша хум евĕрех чупатчĕ...
Ăçтан манатăн-ха çакна,
Куç умĕнчех çил чуптăватчĕ...

Сăлтав та çук-çке кĕвĕçме:
Çут сывлăм пек эсĕ таса-çке.
Çунат парсассăн та вĕçме,
Сарма памасть чĕре суранĕ.

Чаршав карса хĕвел анать,
Ирпе вăл ялкăшса хăпарĕ.
Чавса пек çывăхри анат,
Чăн пурнăç суяран хăтарĕ.

Эс астăватăн-и савни?
Ăрша хум евĕрех чупатчĕ...
Пулать пуль çылăх – манăçни –
Тен, манăçа кăларас марччĕ?..

Микул ПУЛАР

* * *

Паян кăна сана курасчĕ,
Кая юлать вăл ырана.
Паян кăна пĕрле пуласчĕ,
Ан чĕпĕтсемччĕ сурана.

Чуна уçса эп калаçасшăн,
Ура хурать юри такам.
Сан шухăшна-çке ăнланасшăн:
Паян – савни, ыран эп – кам?

Çапла тĕтрелĕхре пурнатăп,
Çумра пулсассăн та савни...
Пĕрне-пĕри ăнланмасассăн,
Йăлт кăлăхах-çке савăнни.

Паян кăна сана курасчĕ,
Паян кăна пĕрле пуласчĕ...

# Савелий Крамаров хӑйне кусӑхтарнине ӗненнӗ...



## Паллӑ артистӑн юлашки арӑмӗ хӑйсен юратӑвӗ ҫинчен каласа кӑтартать

### Укҫа тӑкакларӗ тӗк...

1993 ҫула кӗтсе илме хатӗрленнӗ май пӗлӗшӗм патӗнче хӑналаннаттӑм. Игорь пӗр кӗтмен ҫӗртен: "Халӗ пирӗн пата Савелий Крамаров килет", – терӗ. Эпӗ сӑмах кам пирки пынине те ӑнланмарӑм. Анчах та пӳлӗме вӑл кӗрсе тӑрсан ҫӑвар карӑлса кайрӗ-тӗр... Чаплӑ костюмпа. Ҫыпӑҫуллӑ тӑхӑннӑ... СССР миллион куракансӗн юратнӑ артисчӗ! Тата ӑҫта-ха? Сан-Францискора!

Пӗрремӗш хут тӗл пулнӑранпа сакӑр уйӑх та иртнӗччӗ. Савелий ҫак вӑхӑтра Уоррен Биттипе "Любовный романа" ӳкерӗнме ӗлкӗрнӗччӗ. Ӑна лайӑх гонорар тӳленӗ те вӑл каллех Сан-Францискона килчӗ – ҫурт туянма. Ҫуртне вара вӑл вӑрманта кӑна илесшӗнччӗ.

Игорьпе пӗрле вӗсем Форес-Ноулс – вӑрманлӑ, сӑртлӑ вырӑн вӑл – ҫурт пӑхнӑ. Каялла таврӑннӑ май артист мана аса илнӗ: "Ҫав грузинка патне шӑнкӑравлама пултаратӑн-и?" Эпӗ ун чухне Грузирен таврӑннипе ҫавӑн пек чӗнетчӗ вӑл мана. Каферен вӗсем ун чухне киле ҫитиех ӑсатса ячӗҫ. Савелий манӑн телефон номерне ыйтса илчӗ. Эпӗ шухӑшласа тӑмасӑрах патӑм. Ҫакӑнтан пирӗн телефон романӗ пуҫланасса эпӗ ун чухне шухӑшлама та пултарайман.

Тепӗр тесен, арҫын шухӑшӗ-и унта? Эпир ывӑлпа ют ҫӗршывра чӑматан ҫинчи пек пурӑнаттӑмӑр. Тӑван кӗтесрен Грузипе Абхази хушшинче вӑрҫӑ пынине пула тухса тарма тивнӗччӗ.

Савелий вӗҫӗмех шӑнкӑравлама пуҫларӗ. 3-4 сехет калаҫаттӑмӑр. Унӑн сӑмахӗсене шӳт шайӗнче кӑна йышӑнаттӑм.

Малтанах вӑл 50 ҫулсенче пулӗ тесе шухӑшланӑччӗ. Вӑл хӑйӗн водитель удостоверенине те пытаратчӗ манран – ҫулӗсене ан пӗлтӗр тесе. Интернета кӗрсе пӑхмалла пулчӗ. Савелий – 59-та! Манран 21 ҫул аслӑ...

Кӗҫех вӑл мана хӑй килӗштернӗ ҫурта пӑхма илсе кайрӗ. Юмахри пек вырӑн! Йӗри-тавра вӑрман: хурӑн, чӑрӑш... Кӑмпа шӑрши кӗрет. Унтан пӗр кӗтмен ҫӗртен пӳрнеме ҫӗрӗ тӑхӑнтартрӗ. "Халӗ сана ҫураҫнӑ". Ҫакна каллех шӳтлесе йышӑнтӑм. Эпир темиҫе хутчен кӑна тӗл пулнӑ вӗт. Каҫхине вара вӑл пире – Игорьпе арӑмне тата мана – ресторана чӗнчӗ. Рок-н-ролл кӗвви янӑраса кайрӗ. Савелий мана ташша чӗнсе каларӗ. Ӑҫтан тухать вӑйӗ? Е маччана ҫити ывӑтать, е урайне ӳкес патнех ҫитсен ярса илет, ҫавӑрттарать кӑна... Тепӗр кунне Игорь шӑнкӑравларӗ: "Асту, Савелий хӗрарӑм тӗлӗшпе 150 доллар тӑкакларӗ тӗк..."

### Ухмах...

Арҫын укҫа-тенке пите ҫирӗп тыткалатчӗ. Гонорарӗсем пӗчӗккипе ҫыхӑнман ку. Вӑл ҫурт туянма хатӗрленетчӗ. Пӗр тесен, акӑлчанла калаҫмасӑр Голливудра карьера тума пулать-и вара? Ҫӗршывран тухса кайиччен хӑйне Александр Митта ӳкӗтленине аса илетчӗ вӑл: "Савелий, эсӗ пирӗн – тӗп ухмах. Пӗтӗм тӗнче юратакан ухмах пурпӗр пулаймастӑн". Анчах та Крамаров касса татнӑ: "Ухмах таҫта та кирлӗ!" Паллах, Луи Фюнес шайне ҫитеймерӗ вӑл, анчах та ӳкерӗнме ӑна час-часах чӗнетчӗҫ.

Унӑн ӗмӗчӗ 12 ҫултан пурнӑҫланчӗ. Вӑл ҫуртшӑн укҫан пӗр пайне хывнӑ та ӑна шухӑшламашкӑн вӑхӑт панӑ. Пӗррехинче шӑнкӑравласа манпа та канашларӗ: "Те ҫыхлансан лайӑх, те?.." Лос-Анджелесра унӑн ӗҫ, юлташӗсем... Вӑл кунта мӗншӗн куҫас тенине никам та ӑнланмастчӗ. Арӑмӗпе уйрӑлнӑскер, тен, йӑлтах ҫӗнӗрен пуҫлама ӗмӗтленнӗ?

### Раввин та йӑнӑшать

Саккуна пӑхӑнса пурӑнма хӑнӑхнӑскер Америкӑна куҫсассӑн вӑл раввинран пулӑшу ыйтнӑ. Лешӗ ӑна Маринӑпа паллаштарнӑ. Иккӗшӗ пӗртен-пӗр хутчен тӗл пулнӑ та уйӑхран пӗрлешнӗ. Ӑнӑҫман. Пачах та расна ҫынсем пулни каярахпа палӑрнӑ. Марина ҫулталӑкри хӗрне илсе Савелие нимӗн те каламасӑрах Лас-Вегаса тухса кайнӑ. Крамаров ҫавӑн ҫинчен калаҫма юратмастчӗ. Аса илме тивсессӗн те пит-куҫне пӗркелесе: "Раввинсем те йӑнӑшаҫҫӗ!" – тетчӗ.

### Симӗс... питлӗ арҫын

Эпир унпа ҫулталӑк хутшӑнтӑмӑр. Вӑл мана Лос-Анджелесри хӑйӗн тара илнӗ хваттерне чӗнчӗ. Вӑл пӗррехи хут хӗре тӗлпулӑва чӗннӗ качча пек хумханнине сисрӗм.

...Ирхине Савелий ваннӑйӗнчен кивӗ кӗпепе тата ...сипсимӗс питпе тухрӗ. Эпӗ вара, вӑл чапа юратнине пӗлекенскер, Савелий пурҫӑн халат тӑхӑнасса кӗтнӗччӗ. Унӑн шухӑшӗпе вара юратнӑ ҫынна темӗнле те курма хӑнӑхмалла иккен. Пушшех те – ӑна сӑн-пичӗшӗн юратаҫҫӗ. Эпир тавлашсах кайрӑмӑр. Юлашкинчен ӑна каялла ваннӑйне хӑваласа ятӑм: "Хаклӑ пит-куҫна хупӑ алӑк хыҫӗнче тасат".

### Тӑваттӑмӗш арӑм

60 ҫулхине паллӑ тунӑ чухне вӑл пӳрнене кӗвӗр чуллӑ ҫӗрӗ тӑхӑнтартрӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн эпир пӗрлешрӗмӗр. Мана кирлех те марччӗ-ха ку. Савелий, йӗркене пӑхӑнаканскер, ҫине тӑчӗ. Ҫапла эпӗ Савелий Крамаровӑн официаллӑ тӑваттӑмӗш арӑмӗ пулса тӑтӑм.

Пӗрремӗш хут вӑл 18 ҫулта авланнӑ – Мускаври вӑрман хуҫалӑхӗн техникумӗнче вӗреннӗ чухне пӗр курсри студенткӑпа пӗрлешнӗ. Ҫакӑн пирки ыйтсан: "Ҫамрӑкла, айванла, пӗрлешнӗ те 3 ҫултан уйрӑлнӑ – тинӗсри пӑрахутсем пек", – терӗ. Иккӗмӗш мӑшӑрӗпе Машӑпа 13 ҫул пӗрле пурӑннӑ. Хӗрарӑм упӑшкине пите юратнӑ. Сарӑ ҫӳҫлӗскер, Савелирен пуҫ чухлӗ ҫӳллӗскер. Сӑмах май, ҫакӑ ӑна пите килӗшетчӗ. Мана вӑл пӗрмай сӑмах тӗкетчӗ: "Мӗншӗн пӗчӗк эсӗ? Мана лутрисем нихӑҫан та килӗшмен. Пур арӑм та ҫӳллӗ пулнӑ манӑн!" Машӑпа ҫырӑнман вӗсем. Хӗрарӑма Савелий хӑй те юратнӑ. Анчах та юттисемпе айкашма пӑрахман. Лайӑхран лайӑххине шырани аркатнӑ вӗсен хутшӑнӑвӗсене. Тата, паллах, чап...

Манпа вара вӑл лӑпланчӗ. Тинех тивӗҫтерекеннине тупрӗши?

### Чаплӑ

Маншӑн ывӑлӑм яланах хаклӑ пулнӑ, ҫавӑнпах эпӗ Савелий хушаматне илмерӗм, хамӑнне сыхласа хӑвартӑм – Сирадзе. Мӑшӑрӑм ҫакна ӑнланчӗ, кӳренмерӗ. Унӑн хӗрӗпе те тӗл пултӑмӑр эпир. Туй хыҫҫӑнах Лас-Вегаса тухса кайрӑмӑр. Кӑнтӑрла Бася пирӗнпеччӗ, каҫхине ашшӗ ӑна амӑшӗ патне ӑсатрӗ.

Сава хӑйӗн йӑнӑшӗсем ҫинче пурӑнма вӗренетчӗ. Манпа пите чӑтӑмлӑччӗ вӑл. Хӑй малтанах ҫакӑн пек пулнӑ тӑк ҫемйине упраса хӑварма пултарнине те палӑртатчӗ. Чапа пула, паллах, пуҫӗ ҫаврӑнатчӗ унӑн. Пӗррехинче мана: "Хӑв кампа пурӑннине пӗлетӗн-и?" – терӗ. "Савелий Крамаровпа", – терӗм. Вӑл вара мана тӳрлетрӗ: "Чаплӑ Савелий Крамаровпа!" Эпӗ, тӗрӗссипе, унӑн чапне пӗрре те хирӗҫ марччӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн ҫаплах чӗнме пуҫларӑм: "Чаплӑ Савелий Крамаров". Вӑл ҫакӑншӑн пите кӑмӑллӑччӗ.

### Ашшӗ таврӑнман

Сава ашшӗне, паллӑ юриста, арестленӗ хыҫҫӑн, амӑшӗ ун пирки "вӑрҫӑра" тесе пӗлтернӗ ывӑлне. Ҫакӑн хаҫҫӑн ашшӗ вӑрҫӑран таврӑнаса вӑрах кӗтнӗ пепки. Кӗтсе илеймен, арҫын лагерьсенчен тухсан пурнӑҫне урӑх хӗрарӑмпа ҫыхӑнтарнӑ. Савӑпа амӑшне пите йывӑр килнӗ. Амӑшӗсӗр те ирех тӑрса юлнӑ вӑл – хӗрарӑм хӗрӗх ҫулта рака пула вилнӗ. Кутӑн арҫын ачана амӑшӗн тӑванӗ итлеттерейме – Сава хӑйӗн хваттерӗнче пӗчченех пурӑннӑ, ҫывӑх ҫыннисем патне апат ҫиме кӑна ҫӳренӗ. 17-ре вара ӗҫлесе илме пуҫланӑ.

### Слон пек...

Амӑшӗ чирлесе вилнипех Сава ҫывӑ пурнӑҫ йӗркине ҫирӗп пӑхӑнатчӗ – курӑк чейӗ кӑна ӗҫетчӗ. Рецептне хӑех йӗркелетчӗ. Апат ҫывӑхне никама та ямастчӗ, хӑй кӑна хатӗрлетчӗ. Режимӗ те ҫирӗпчӗ унӑн – Лос-Анджелесра ир океанра ишиннчен пуҫланатчӗ. Пляжра сехечӗ-сехечӗпе ҫӳретчӗ. Эпир тӗрлӗ пӳлӗмре ҫывӑраттӑмӑр, савӑшас кӑмӑл ҫуралсан пӗр-пӗрин патне дворянсем пек шаккаса кӗреттӗмӗр. Ҫывӑрма яланах пӗр вӑхӑтра выртатчӗ вӑл. Телефона сӳнтеретчӗ. Вӑратма вара юрамастчӗ. Ирхине ҫавӑнпахтӑр яланах йӑл кулӑпа вӑранатчӗ: "Слон пекех ҫывӑрнӑ!" Пачах туртмастчӗ вӑл, тумлам та ӗҫместчӗ. Ҫавӑнпах хӑшӗ-пӗри пирӗн пирки каланӑ сӑмах суя кӑначчӗ: "Крамаровпа арӑмӗ ӗҫсе супнӑ иккен те хапха айӗнче йӑванаҫҫӗ". Пулман ун пекки. Ташлама юрататчӗ вара. Шӑпах килтен инҫех мар Бразили ташшин курсӗ уҫӑлнӑччӗ. Эрнере иккӗ ҫӳретчӗ унта вӑл.



### Тултан – нимӗр, шалтан – Лувр!

Хӗр-хӗрарӑм енӗпе, чӑн та, ытлашшипех кӑсӑкланатчӗ-ха. Пӗррехинче, икӗ хӗре хамӑрӑн ҫурта кӑтартса ҫӳренӗ чух, пӗрин ҫинчен куҫ илменнине асӑрхарӑм. Кӑмӑл пӑсӑлчӗ. Айккинелле пӑрӑнтӑм. Ҫакна вӑл тӳрех сисрӗ. Хӗрсем тухса кайсан пырса каҫару ыйтрӗ. Хӑйне текех ун пек тыткаламассине каларӗ. Сӑмахне тытрӗ.

Ҫурта вара чӑнласах пите юрататчӗ. "Тултан – нимӗр, шалтан – Лувр!" – тетчӗ. Йӑлт картинӑсемпе, статуэткӑсемпе тултарнӑччӗ. Картинӑсене, вырӑн шыраса, 30 хутчен те куҫара-куҫара ҫакма пултаратчӗ. Шӑтӑксене хупласа халтан каятӑмӑр кайран. Сӗтел-пукан хӑй туянатчӗ. Чӳрече каррисене хӑй суйлатчӗ. Телефон шӑнкӑртаттсан: "Крамаров улпут итлет!" – тетчӗ. Ҫул ҫӳреме пите юрататчӗ. Укҫа мӗн чухлӗ тӑкакланине кӑна шута илместчӗ. "Мӗншӗн унпа пуҫа ыраттарас?" – тетчӗ. Эпӗ мӗн чухлӗ тӑкакланине те нихӑҫан та тӗрӗслеместчӗ.

Вӑл ҫӗршывран мӗншӗн тухса кайнине никам та ӑнланмастчӗ. Пӗрисем Голливуда паӑнтарасшӑн пулнӑ тетчӗҫ, теприсен шухӑшӗпе синагогӑна ирӗклӗн ҫӳресшӗн пулнӑ имӗш. Вӑл та, ку та тӗрӗс пек туйӑнать мана. Анчах та Америкӑра Крамаровӑн пурнӑҫӗ ӑнманнине калатчӗҫ Союзра: те сосискӑ сутать вӑл, те такси водителӗнче ӗҫлет. Пӗр сӑмахпа, чухӑн... Ҫапах та Сочире иртнӗ "Кинотаврта" ӑна тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илнӗ.

### "Америка сасси"

...Ҫӗршывран пачах тухса каймашкӑн документсене парсан ӑна малтанах хирӗҫленӗ-ха. Тытса чарас тесе "халӑх артисчӗн" ятне те шантарнӑ. Нимӗнпе те килӗшменнине кура ӑна ӳкерме пачах чарнӑ.

Нимӗнпе те ӗҫ тухманнине кура юлташӗсенчен пӗри Рейган патне ҫыру ҫырма, Голливудра ӳкерӗнме пулӑшмашкӑн ыйтма сӗннӗ. Ҫырӑва "Америка сасси" 6 хутчен кӗрлеттернӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн документсене пите хӑвӑрт алӑ пуснӑ.

### Хӑрушӑ диагноз

Эпӗ Америкӑна тин кӑна куҫса килнӗччӗ. Вӑл мана тӗнче кӑтартма ӗмӗтленетчӗ. Чӑн-чӑн еврей туйӗ иртерме палӑртнӑччӗ. Вӑл йӑлт калаҫса татӑлнӑччӗ ӗнтӗ.

Эпир черетлӗ Ҫӗнӗ ҫул кӗтсе илтӗмӗр. Кӑрлач уйӑхӗ. Сасартӑк унӑн сылтӑм енчи айӑкӗ чиксе ыратма пуҫларӗ. Тухтӑрсем хӑрушӑ диагноз палӑртрӗҫ. Сава хӑйне такам кусӑхтарнине ӗненетчӗ. Ара, сып-сывӑ ҫын, нихӑҫан та чирлемен, эмел ӗҫмен. Вӑл 100 ҫул пурӑнма палӑртатчӗ.

Эпӗ ҫапах та йӗркеленессе шантӑм-ха. Анчах та вӑл, сиплеве пӑхмасӑрах, куҫ умӗнчех сӳнсе пычӗ. Юлашкинчен темӗнле сасса илтме пуҫларӗ. Пӗррехинче чӑтаймарӑм, ҫав сасӑ ӑна мӗн каланине ыйтрӑм. "Пӗлетӗн-и? Эпӗ пите лайӑх пурӑнса иртертӗм пурнӑҫа... Чапа тухрӑм. Йывӑрлӑх та, савӑнӑҫ та пулчӗ. Юратрӑм. Мана та юратрӗҫ. Санпа тӗл пултӑм. Савнӑ хӗрӗм ӳсет. Ӗмӗте пурнӑҫларӑм – ҫурт туянтӑм..." Эпӗ вӑл йӑлтах йӗркеллӗ пуласса каласса кӗтрӗм. Ҫук, каламарӗ... Амӑшӗ рака пула вилнӗ хыҫҫӑн Сава ҫак чиртен пите хӑратчӗ. Хӑй те рака пулах куҫне хупрӗ.

Нимӗншӗн те кулянмастӑп – пӗрле пите сахал пурӑнтӑмӑр: икӗ ҫул. Ҫакӑ ҫеҫ чуна ыраттарать. Манпа вӑл юлташӗсене: "Паллашӑр: ку – манӑн юлашки арӑм", – тетчӗ. Ҫапла пулса тухрӗ те. Мӗнле вӑй ҫапла хӑвӑрт ҫаврӑттарса уйӑрса кайрӑ ӑна манран – ӑнланмастӑп... Телей тӑвӗн тӑрринче хӑпарса ҫитсен таталчӗ пурнӑҫӗ. Паян эпӗ Сава сӑмахӗсене девиз вырӑнне хурса пурӑнатӑп: "Таҫта васкатпӑр... Урӑхла пурӑнмалла... Ир тӑрсан хӗвеле куртӑн-и? Савӑн. Кунта темӗн пек начар пулсан та унти лайӑххинчен аванрах..."



Кирек мĕнле хĕрарăм та ыйха путсан телефон шăнкăртатнине, домофон сас панине илтмессе те пултарать. Анчах та ачи сывланине кирек мĕнле хĕрарăм та çывăрнă чухне те илтет!

* * *

– Анне, шыв килсе пар-ха!

– Тăр та ĕç.

– Ну, анне, илсе килсе пар ĕнтĕ...

– Ан йĕрмĕш! Тарăхтар-ха! Халех пиçиххи илсе ăшалăп!

– Вăт-вăт, пиçиххипе пĕрле шыв та илсе кил-ха...

* * *

– Пикеçĕм, эсир шурă лашаллă принца кĕтетĕр терĕç.

– Çапла.

– Ну вăт – эпĕ килтĕм...

– Питĕ аван. Принц вара ăçта?

* * *

Идеал шайĕнчи çынна ан шырăр. Паян эпĕ килте. Канатăп.

* * *

– Çемьеллĕ-и? – ыйтать судья.

Свидетельница хаш! сывлать. "Качча кайман", – çырса хурать секретарь.

– Эсир вара çемьеллĕ-и?

Свидетель хаш! сывлать. "Авланнă", – çырса хурать секретарь.

* * *

Травмпунктран бинтпа çыхса пĕтернĕ арçынпа хĕрарăм тухаççĕ те такси чараççĕ.

– Анчах та эсир, тархасшăн, хытă ан хăвалăр, – теççĕ хăйсем машинăна ларнă май. – Ĕнер авă пĕрне пула инкеке çаклантăмăр.

– Уй, эсир пултăр-и-ха ку? – çаврăнать пассажирсен енне таксист.

* * *

– Атте, пирĕн килте юсав ĕçĕсем вĕçленнĕ тĕле эпĕ миçере пулатăп?

* * *

Ашшĕ-амăшĕн пухăвне пуçтарăннă май ывăлăм çула: "Анне, чи кирли – никама та ан ĕнен!" – тесе ăсатрĕ.

* * *

Пурăннă тет пĕр карчăкпа пĕр старик.

– Итле-ха, старик, ача кĕтетĕп эпĕ... – тет карчăк.

– Ыранах вĕçтерсе çитеççĕ ĕнтĕ – пенси хăçан илнине пĕлеççĕ вĕт, – хуравлать старик.

* * *

– Пикеçĕм, санăн аннӳне кĕрӳ кирлĕ мар-и?

– Çук. Эпир кăна та кăшлаcа яман-ха.

* * *

Упăшкалăх арçынна паллашу сайтĕнче мар, ĕç шыракансен резюме банкĕнче пăхăр – унта Голливуд актерĕсенне мар, хăйсен сăнӳкерчĕкĕсенех вырнаçтараççĕ.

* * *

Мĕн пулнă паян арçынсене? Хĕрарăмăн яланах пĕрремĕш утăм тумалла – хăвăн сăмах чĕнмелле, хăвăн шăнкăравламалла, хăнана та хăвăн патна чĕнмелле... Машинăпа илме пынă чух чечек çыххи те туянмалла-и?

* * *

– Ача тупăнни çемьере хирĕçтăру çуратма пултарать-и?

– Паллах, çав ача киле çурçĕр иртсен тата сĕм ӳсĕр таврăнсан.

* * *

Сăмахăн çуначĕ çук, анчах та тĕнчипех çаврăнать.

* * *

Тин кăна качча тухнă хĕрĕ амăшне каласа кăтартать:

– Эпир ниепле те çывăрса тăранаймастпăр – çурçĕр иртни виççĕре кăна выртатпăр та...

– Çамрăк чух çапла ĕнтĕ, – килĕшет амăшĕ. – Ну, сирĕн ĕçĕн кăтартăвĕпе аçупа иксĕмĕр часах савăнатпăр пулĕ-ха?

– Паллах! Эпĕ "Фермăра" пиллĕккĕмĕш шая çитрĕм ĕнтĕ, вăл вара "Танксенче" – саккăрмĕшне!

* * *

– 7 пин тенкĕ шалу илекен специалистăн мĕн тумалла?

– Нимĕн те. Ăна çав укçашăн ĕçе пырса çӳренĕшĕн тав тумалла.

* * *

Хулара пурăнакан каччă яла машинăпа кайнă. Кĕтмен çĕртен ăна çул çинче чăх хăваласа иртсе каять. Тĕлĕннĕ каччă хăвăртлăха ӳстерет. Чăх та юлмасть. Спидометр йĕппи 100 ытла кăтартать. Чăх тата хытăрах чупать. Ферма тĕлне çитсен çултан пăрăнать хайхи. Каччă та машинине чарса фермăра ĕçлекенрен ыйтать:

– Мĕн пулчĕ ку?

– Чăх. Çĕнĕ йышши ăрат.

– Мĕн йышши?

– Какайлăх самăртаканни.

– Тутлă-и вара какайĕ?

– Кам пĕлет... Хальлĕхе ăна хăваласа çитсе тытакан пулман-ха.

* * *

Упăшка Интернетра çаппаçарамас майрасене пăхса ларнине курсан асăрхаттармасăр чăтаймарăм – ара, порносайт вĕт ку!

– Мĕн эсĕ? – мăшăр хуравĕ анратсах ячĕ: – Ку – аслă ӳсĕмри çынсем валли...

* * *

– Атте, стройка йĕри-тавра ку хӳмене леш енчи çынсем мĕн ĕçленине ан курччăр тесе тытнă-и? – ыйтать ача садĕнчен таврăннă май ывăлăм.

– Çук, пачах тепĕр май, нимĕн те ĕçлеменнине ан курччăр тесе.

☺ И-ХИ-ХИК ☺

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Эпĕ 54 çулти, ĕçлесе пурăнакан арçын. Хам юратăва тупса авланасшăн. Т. 8-927-854-68-15.

### ĔÇ РАБОТА

**126.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

*КАЗАКОВĂСЕНЕ, ХРАМОВĂСЕНЕ, УТКИНĂСЕНЕ ВАÇУКСЕМ 70 çулпа саламлаççĕ.*

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 89625994706.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**65.КРС** – коров, бычков, **тёлок; лошадей.** Т. 8-903-389-85-72.

**66. КРС – коров, бычков, тёлок;** лошадей. Т. 8-961-345-05-28.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.Акция! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 8-967-470-46-77.

**3.Акция! Кольца колодезные** диам. – 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 8-967-470-46-77.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**15.Кирпич, кольца.** Т. 89613393363.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 8-906-381-44-20.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозем. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Доставка. Тел. 48-16-54.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 683045, 89379522211.

## КĂСĂКЛĂ

# Хурма

Хурма латин чĕлхинчен "чĕре панулмийĕ" тесе куçать. Унăн тăван çĕршывĕ Китай шутланать. Паян ăна Арменире, Азербайджанра, Грузире, Грецире, Киргизире, Турцире, Крымра, Австралире тата ытти çĕршывра ӳстереççĕ.

Хĕрлĕ-сарă тĕслĕскер паха витĕмлĕ. Унра йӳçек сахалран вăл вар-хырăм ĕçне сиен кӳмесĕр йĕркене кĕртет. Пĕверпе пӳре чирĕсене сиплеме те пулăшать. Бактерисемпе кĕрешес пахалăхĕ пуртан пыршăри тĕрлĕ инфекцие те пĕтерет.

С, РР, Е, А витаминсемпе, кальципе, калипе, тимĕрпе, фосфорпа, магнипе, марганецпа, йодпа, пăхăрпа та пуян ку çимĕç. Чĕре япăх ĕçленĕрен пухăннă ытлашши шыва кăларма та тухтăрсем хурма çиме сĕнеççĕ. Кун пек чухне пӳрене йывăр ан килтĕр тесен ăна сĕтпе сыпса антармалла.

Хурма юнри сахăр виçине те хăпартмасть, ӳт те хуштармасть. Атеросклерозран сипленнĕ чухне те витĕмлĕ пулăшать. Кун пек чухне хурмана кунне 100 грамм çини те çителĕклĕ.

Хурма нерв тытăмне лăплантарма, пуçа ĕçлеме пулăшнине те палăртмалла.

Ку çимĕçпе туслашма диетологсем те, косметологсем те сĕнеççĕ. Çав вăхăтрах асăрханулла та пулмалла. Хырăмай парĕн чирĕ аптратсан, пыршăлăхра операци тин тунă çынсен унран пăрăнмалла. Тула йывăррăн тухакансен те асăрханулла пулмалла.

« ХЫПАР »

Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07

Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ. Тираж 8141. Заказ 824.